ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
18
ЮНКУН
№ 225 (9134)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Таван çĕршывра (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ. Н. Минин.—Кувакино (1 стр.).
Куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине ÿстерес тата вĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе туса ирттермелли ĕçсем, çинчен СССР Куллен кирлĕ промышленность таварĕсен министрĕ А. Н. Косыгин юлташ Пĕтĕм Союзри çăмăл промышленность работникĕсен канашлăвĕнче 1953 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнче тунă доклад (2—3 стр.).
Польшăра тавар хакĕсене йÿнетнĕ (4 стр.).
Демократиллĕ Вьетнам Республикин Министрсей Советĕнче (4 стр.).
Уругвайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ (4 стр.).
Франци халăхĕ Бонра тата Парижра тунă договорсене çирĕплетессине хирĕç тăрать (4 стр.).
Англири тата Францири хаçатсем тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас ыйту çинчен (4 стр.).
Мосаддыка суд туни (4 стр.).
КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ. Г. Матвеев, С. Юшков.—Тĕллев патне çитеймен (4 стр.).

МТС—колхоз производствин аталанăвĕнче ĕçе татса паракан вăй

Пирĕн Таван çĕршыври ĕççыннисем, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ СССР ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе йышăннă программăна пурнăçлассишĕн кĕрешĕве вăйлатса пыраççĕ. Çак пĕтĕм халăхăн аслă ĕçĕнче машина-трактор станцисем, вĕсенче ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсем, агрономсем, зоотехниксем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн пленумĕ çапла йышăннă: «Машина-трактор станцийĕсен тĕп задачи вăл—колхозсенче мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне пĕрмай ÿстерсе пырасси, обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстернипе пĕр вăхăтрах унăн йышне ÿстересси, МТС-сем ĕçлекен колхозсенче çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн валовой тата товарлă продукцине ÿстересси пулать тесе палăртас. МТС-сен уй-хир ĕçĕсене механизацилессине вĕçлесе çитермелле, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре, çĕрулмипе пахча çимĕçсем туса илес ĕçре ĕç вăйĕ нумай ыйтакан ĕçсене механизацилессине анлăн сарса ямалла, наукăн тата малта пыракан практикăн çитĕнĕвĕсене колхоз производствине кĕртсе пымалла, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетмелле тата çак никĕс çинче колхозниксен материальнăй пурнăçне лайăхлатмалла».

Машина-трактор станцийĕсем колхоз стройĕн индустриллĕ материаллă-техникăллă никĕсĕ пулса тăраççĕ, хальхи вăхăтра колхоз производствине аталантарас ĕçре татса паракан вăй, колхозсене социализмла государство енчен ертсе пырас çĕрте питех те паха опорнăй пунктсем пулса тăраççĕ. МТС-сем миллионшар первоклаcнăй машинăсем тытса тăраççĕ. Халĕ ĕнтĕ колхозсене пулăшас тĕлĕшпе ялхуçалăх специалисчĕсен тĕп кадрĕсем вĕсенче пĕтĕçсе тăраççĕ. Ялхуçалăх органĕсен районти сыпăкне çĕнĕлле организацилени машина-трактор станцийĕсен пĕлтерĕшне нихçанхинчен те ытла ÿстерет. Вĕсем колхоз производствин организаторĕсем пулса тăраççĕ. Районсенчи парти аппаратне çĕнĕлле йĕркеленĕ, колхозсемпе МТС-сене ертсе пырас ĕçри обезличкăна пĕтернĕ, райкомсенче кашни МТС-а ертсе пыма парти райкомĕн секретарĕ ертсе пынипе ĕçлекен работникĕсен ушкăнĕ туса хунă май ялта пĕтĕм партилле-политикăлла ĕçе лайăхлатма аван условисемпе кирлĕ майсем пулса тăраççĕ. Çапла ĕнтĕ колхоз производствин мĕнпур отраслисене малалла татăклăн вăйлатасси, чи малтан, МТС-сенчен, вĕсен ĕçĕн пахалăхĕнчен килет.

Анчах çакăнтан тата çĕршывра ялхуçалăх продукчĕсем ытлашшипех çителĕклĕ пулмалла тăвассишĕн кĕрешес ĕçре машина-трактор станцийĕсен работникĕсен пысăкран та пысăк ответлăхĕ тухса тăрать. МТС-сем тракторпа тумалли ĕçсен планне тултарассишĕн, колхозсемпе тунă договорсене пурнăçлассишĕн кăна мар ответлă, МТС-сем колхоз производствин мĕнпур отраслĕсемшĕн, хăйсем ĕçлесе тăракан колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетессишĕн ответлă пулса тăраççĕ.

Машина-трактор станцийĕ вăл подрядчик мар, прокатнăй пункт мар. Вăл колхоз производствин руководителĕ тата организаторĕ, вăл колхоз экономикине аталантарса пырать, ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе государство планĕсене тултарма пулăшать. Çакăнта ĕнтĕ ялхуçалăхне ертсе пырассине КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановлени тата партипе правительство решенийĕсем тăрăх урăхлатса çĕнетес ĕçĕн пĕлтерĕшĕ.

Хальхи условисенче МТС-сен обязанноçĕ нихçанхинчен те нумай ÿсрĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ уйăрса хунă-и? Фермăсенче выльăхсене хĕл каçарас ĕçе тĕрĕс организациленĕ-и? Колхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана тултарнă-и? Вăрлăх çителĕклĕ хывса хăварнă-и? Колхозра кирлĕ пек йĕрке туса хунă-и? Ĕçе тĕрĕс организациленĕ-и? Колхоз пурнăçĕн çавнашкал тата ытти нумай ыйтăвĕсем хальхи вăхăтра машина-трактор станцийĕсен таван ĕçĕ пулса тăраççĕ.

Ку вăл, паллах, хальхи вăхăтра колхоз кадрĕсенчен, колхозри парти организацийĕсенчен сахал ыйтаççĕ тенине пĕлтермест. Пачах тепĕр майлă, вĕсен пĕлтерĕшĕ хальхи вăхăтра нихçанхинчен те ытла ÿсет. Задача çакăн пек: колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене специалистсемпе, практиксемпе, производствăн талантлă организаторĕсемпе тĕреклетмелле, мĕнпур колхозниксене ялхуçалăхне малалла аталантарма çĕклентермелле. Çавăн пекех партипе правительство решенийĕсене пурнăçлассишĕн, районти ялхуçалăх ĕçĕсемшĕн райисполкомсен ответлăхне те татăклăн ÿстерни кирлĕ. Райисполкомсен колхозсене, совхозсене, уйрăмах, МТС-сене ытларах конкретлă ертсе пымалла.

Ялхуçалăхĕ умне çĕнĕ задачăсем тухса тăнă май правительствăпа парти колхоз производствине аталантарас ĕçре машина-трактор станцийĕсен пĕлтерĕшне малалла ÿстерес тĕлĕшпе государствăлла пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. МТС-сенче çĕнĕ техникăна хăнăхса унпа тĕрĕс усă курма пултаракан ялан ĕçлекен рабочисен кадрĕсене туса хураççĕ. Машина-трактор станцийĕ ĕçлесе тăракан кашни колхозра агроном е зоотехник, пысăк колхозсенче вара—кашни бригада е ферма валли специалист пултăр тесе, вĕсене пысăк квалификациллĕ специалистсем парса тĕреклетеççĕ. МТС-сене ертсе пыракан инженерсемпе техниксен кадрĕсемпе тĕреклетме промышленноçран ялхуçалăхне нумай пин инженерсемпе техниксем ярса параççĕ.

Халĕ ĕнтĕ ĕç çакăнта пулать: парти организацийĕсен, совет тата ялхуçалăх органĕсен МТС-сен ĕçне тивĕçлипе улăштарса çĕнетме тытăнмалла. МТС-сен ĕçне татăклăн лайăхлатмасăр мĕнпур колхозсене малта пыракан колхозсен шайне çитерме, кашни колхозра ялхуçалăх продукчĕсем ытлашшипех хатĕрлес ĕçре çитĕнÿсем тума çук.

Шел пулсан та, пирĕн вырăнти партипе совет органĕсен уйрăм работникĕсем машина-трактор станцийĕсен ĕçне вăраха ямасăр лайăхлатмалли, колхоз производствине аталантарас ĕçре вĕсен пĕлтерĕшне ÿстермелли задачăсене питех те вăраххăн татса параççĕ. Çакă паллă: ялхуçалăхне малалла аталантармалли тĕп ыйтусенчен пĕри вăл МТС-семпе колхозсене квалификациллĕ кадрсемпе тĕреклетесси пулса тăрать. Çак задачăна мĕнле татса параççĕ-ха? Çĕршыври нумай районсенче МТС-сем валли инженерсемпе техниксен тата агрономсен кадрĕсене суйласа илес ĕç хăй юххипе пулса пырать.

Специалистсем суйласа илсе, вĕсене производствăна ярасси государствăлла пысăк ĕç. Специалистсене суйласа илни кăна, путевка пани, ĕçе уйăрса лартасси çинчен приказ кăларни кăна сахал-ха. Кашни инженера, агронома, зоотехника çĕнĕ вырăнта ĕçе вырнаçма, производство ĕçне активлăн хутшăнма пулăшас пулать.

МТС-сен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсене вăраххăн татса панине малашне чăтса тăма çук. Союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсен, парти крайкомĕсен, обкомсен, райкомсен, совет тата ялхуçалăх органĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта машина-трактор станцисен ĕçне лайăхлатмалли ыйтусем тăмалла. Кашни МТС-ра ĕçсем мĕнле тăнине пăхса тухмалла, колхозсене пулăшас тĕлĕшпе МТС-сене хăйсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетме пулăшмалла. Сăмах кунта акă мĕн çинчен пырать: машина-трактор станцийĕсен руководителĕсемпе специалисчĕсен кашни колхоз ĕçĕпе паллашмалла, вĕсен государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас, вăрлăх хывас, выльăхсем валли апат хатĕрлес ыйтусене хăвăртрах татса пама мĕнле колхоза паян мĕнле пулăшу памаллине пĕлсе тăмалла.

Хальхи вăхăтра МТС работникĕсен уйрăмах выльăхсене хĕл каçарас ĕçе организацилесси çине тимлĕн пăхмалла. КПСС Центральнăй Комитечĕн пленумĕ колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине нумай МТС-сем тимсĕр пăхнине пĕтерме хушрĕ. Колхозсенче выльăхсене лайăх хĕл каçармалла тăвасси МТС-сен тĕп ĕçĕ пулмалла.

Çакна калас пулать: нумай МТС-сем колхозсенче выльăхсене мĕнле тытса усранипе интересленмеççĕ, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарассишĕн начар кĕрешеççĕ. Красноярск крайĕнче, тĕслĕхрен, утă-улăм хатĕрлемелли плана пурĕ те 52,5 процент кăна тултарнă. Çур миллион гектара яхăн çĕр çинчи улăма ку таранччченех купасене пухса çитермен. Красноярск крайĕнчи МТС-сем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе пачах интересленмеççĕ, вăраха ямасăр татса памалли чылай задачăсене пурнăçлама колхозсене пулăшмаççĕ. Уйрăм МТС-сем колхозсенче выльăх апатне фермăсем патне турттарса пымашни çине тимсĕррĕн пăхаççĕ. Пур пек апат запасĕсене расходлас ĕçре нимĕнле йĕрке те çук.

МТС работникĕсен ĕçри хастарлăхне хальхи вăхăтра çитес çуркунне кăтартуллăн хатĕрленес ĕçе пăхăнтармалла. Палăртнă сроксенче тракторсен паркне тата кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене юсаса çитермелле, кашни колхозра кирлĕ чухлĕ тырпул, техникăлла культура, çĕрулми вăрлăхĕсен фодне туса çитермелле.

Машина-трактор станцийĕсем, вĕсенче ĕçлекен рабочисемпе специалистсен пысăк çарĕ ялхуçалăхне малалла аталантарассишĕн пыракан кĕрешĕвĕн малти вырăнĕнче тăраççĕ. Совет халăхĕ çакна шанса тăрать: ялхуçалăх механизаторĕсем Таван çĕршыв умĕнче тăракан хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçлĕç, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртессишĕн хăйсен пĕтĕм вăйĕсене парса кĕрешĕç.

(«ПРАВДА» хаçатăн ноябрĕн 17-мĕшĕнчи умстатьинчен).

ТАВАН ÇĔРШЫВРА

Бетон хума пуçланă

КОМСОМОЛЬСКИ ПОСЕЛОКĔ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Куйбышев гидроэлектростанцине тăвакансем пысăк ĕç тума тытăннă. Вĕсем Атăлăн сулахай çыранĕ патĕнче çиелтен шыв юхса тăмалли плотина котлованне бетон хума пуçланă. Малтан хунă бетонпа канат карса тунă çулăн котлован тĕлĕнчи юписене хытарса лартнă.

Çиелтен шыв юхса тăмалли плотина котлованĕнче пĕтĕмпе 2 миллион та 400 пин кубометр бетон хумалла.

Апат-çимĕç промышленноçĕ валли

ЛЕНИНГРАД, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Красная вагранка» завод апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсене пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен оборудовани туса парать. Паян машиностроительсем Тбилисине тата Андижана çу кăлармалли прессем ярса панă.

Завод коллективĕ машинăсем туса кăларассине хăвăртлатса пырать, çĕнĕ йышши оборудовани туса кăларать. Воровский ячĕпе тăракан макарон фабрикинче çак заводра туса кăларнă çĕнĕ преса ĕçе янă. Çав пресс автоматла ĕçлет. Унта çăнăхпа шыв парса тăрассине, чуста çăрассине тата чустана унассине автоматсем тăваççĕ. Машина кашни сехетре 500 килограмм макарон туса кăларать. Çĕнĕ пресс халиччен пулнă çавăн пек прессенчен икĕ хут çăмăлрах.

Заводри конструкторсем, инженер П. Холменко ертсе пынипе, çу кăлармалли преса лайăхлатнă. Лайăхлатнă преспа тĕрлĕрен ÿсентăрансен вăрринчен çу кăларма пулать. Çу кăларнă чухне çĕнĕ пресс халиччен ĕçленĕ 9 агрегат вырăнне ĕçлет.

Кăçалхи çул завод коллективĕ тăватă йышши çĕнĕ машинăсем туса кăларма тытăннă. Çав машинăсемпе апат-çимĕç тата парфюмери промышленноçĕн предприятийĕсенче усă кураççĕ.

МИЛЛИОН КИЛОМЕТР

Инçет Хĕвелтухăçĕнчи чугун çул çинчи Вяземски пăравус деповĕнчи старши машинист С. Кабанов пăравуса тĕпрен юсамасăр миллион километр çÿретме обязательство йышăннă. Вăл çак обязательствăна пурнăçланă. С. Кабанов хăйĕн локомотивне тĕпрен юсамасăр 1.015 пин километр çÿренĕ. Пăравус халĕ те юсавлă.

Машинист 400 пин тенкĕ перекетлесе хăварнă. (ТАСС).



Украина ССР-ĕ. Винницăри Свердлов ячĕпе тăракан суперфосфат завочĕн коллективĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановленине пурнăçласа, ялхуçалăхĕ валли минераллă удобренисем туса кăларассине ÿстерсе пырать. Завод планран ирттерсе çĕршер вагон суперфосфат туса кăларнă. Пĕтĕм продукци пĕрремĕш сорт шутланать.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: суперфосфат тиенĕ вагонсене завод территорийĕнчен илсе тухаççĕ.

Е. КОПЫТ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Специалистсем колхозниксене вĕренме пулăшаççĕ

КАЛИНИНГРАД, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри колхозсенче килес çулта тĕштырăсемпе çĕрулмине тата пахча çимĕçсене пĕтĕмпех малта пыракан майсемпе акса тата лартса хăварма йышăннă. Колхозниксем ялхуçалăх культурисене акса ÿстермелли малта пыракан агротехникăлла майсене вĕренеççĕ. Ялхуçалăх специалисчĕсем лекцисем вуласа параççĕ, калаçусем ирттереççĕ, кружоксене ертсе пыраççĕ. Вĕсем вĕрентнĕ чухне ялхуçалăх культурисене акмалли, лартмалли тата пăхса ÿстермелли çĕнĕ майсене кăтартса параççĕ.

«Победа» колхоз çĕрулми лартса тăвас ĕçе комплексла механизациленĕ. Çак колхоз уй-хирĕнче Краснофлотски МТС агрономĕ Иванова юлташ Приморски районĕнчи колхозниксемпе тата механизаторсемпе заняти ирттернĕ. Вĕренекенсене çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартса тата рет хушшисене машинăсемпе кăпкалатса кăтартнă.

«Победа» колхоз çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартнă вырăнтан кивĕ майпа тата алăпа ĕçлесе лартнă вырăнтинчен 40—50 центнер ытларах пухса кĕртнĕ.

Озерски, Славски, Краснознаменски районĕсенчи малта пыракан колхозсенче те специалистсем колхозниксемпе çавăн пек занятисем ирттернĕ.

Октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче облаçри ялхуçалăх специалисчĕсем малта пыракан ялхуçалăх артелĕсен уй-хирĕсенче колхозниксемпе вуншар заняти ирттернĕ.

Планран ирттерсе пулă тытаççĕ

ГАНЮШКИНО (Гурьев облаçĕ), ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Тинĕс хĕрринчи шыв пăрпа витĕннĕ. Пăртан таса вырăнсенче пулăçсен парăслă киммисем çÿреççĕ. Вĕсем—Денгизски районĕнчи пулăçсем. Кунти пулăçсем пулă йышăнакан пунктсене çулталăкри планран ирттерсе 20 пин центнер ытла пулă леçсе панă.

Микоян ячĕпе тăракан колхозри пулăçсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсем пилĕк кун хушшинче 2.700 центнер пулă тытнă. Ермеков бригади кашни сĕрмесерен 200 центнер пулă кăларать, ку вăл талăкри заданирен 5 хут нумайрах.

Районти юханшывсенче те пулă тытаççĕ. Пулăçсем, пăр касса пысăк шăтăксем туса, сĕрекесемпе тата ытти тĕрлĕрен хатĕрсемпе пулă тытаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх туянаççĕ

СУХУМИ. Сухуми районĕнчи «Багнари» колхозăн хĕл каçарма кирлинчен ытлашши выльăх-чĕрлĕх пулнă. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ колхозниксене 58 пăру, сысна çурисем тата качакасем сутма йышăннă. Пуху йышăннине пурнăçланă. Колхозниксем ĕçкунĕсемпе тÿлесе выльăх-чĕрлĕх туяннă. Кунсăр пуçне, ялхуçалăх артелĕн правленийĕ çывăх вăхăтра 31 колхознике сыснасем тата сĕтлĕ выльăх туянма пулăшас тесе йышăннă.

Районти ытти колхозсем те колхозниксене выльăх-чĕрлĕх туянма пулăшаççĕ.

ИОНИШКИС (Литва ССР-ĕ). «Гегужис пирмойи» ялхуçалăх артелĕ кăçалхи çул майракаллă шултра выльăх, вăл шутра ĕнесем ĕрчетмелли плана чылай ирттерсе тултарнă. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă тăрăх, халиччен ĕнесĕр пурăннă колхозниксене пурне те ĕнесем панă. Вĕсем ĕне хакне икĕ çул хушшинче тÿлесе татаççĕ.

Районти нумай ялхуçалăх артелĕсенче колхозниксене выльăх-чĕрлĕх туянма пулăшнă. Çак çулталăк иртнĕ тĕле районти колхозсенче ĕне усраман кил юлмасть.

Колхоз правленийĕсем колхозниксене выльăх-чĕрлĕх апачĕ парса пулăшаççĕ. Пур ялхуçалăх артелĕсенче те пекех кашни ĕçкунĕ пуçне аванс шучĕпе 2—4 килограмм утă тата улăм валеçсе панă.

Ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС).

МТС-сенчи ертсе пыракан кадрсен вĕренĕвĕ

ЕРЕВАН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кунта МТС-сенчи ертсе пыракан работниксен квалификацине ÿстермелли курсра занятисем пуçланнă. Икĕ уйăхлăх курсра МТС директорĕсем, главнăй инженерсем тата ремонт мастерскойĕсен заведующийĕсем вĕренеççĕ. Вĕсем пурте халиччен халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенче ĕçленĕ ялхуçалăх специалисчĕсем.

Программа тăрăх курсра партин XIX-мĕш съезчĕн директивисене, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене, агротехника никĕсĕсене, тракторсемпе тата машинăсемпе усă курмалли йĕркесене, МТС-ри учетпа отчетность ĕçне вĕренеççĕ.

Курсра вĕренекенсем республикăри чи лайăх ĕçлекен МТС-сен опычĕпе паллашаççĕ.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

КУВАКИНО

Ку вăл темиçе çул каярах çуркунне пулнăччĕ. Улатăртан Пăрачкава каякан шоссе çулĕпе автомашина пырать. Вунсакăр километр кайсан, умра шап-шурă чечек айне пулнă пысăк ял курăнса кайрĕ. Инçерен пăхсан, ял шурă марлĕ витнĕ пек курăнать.

— Кувакино! Мĕн тери илемлĕ вăл улмуççисем чечеке ларнă вăхăтра...

— Кувакино хăйĕн пысăк сад-пахчисемпе пуян, паха сортлă панулмисемпе мухтавлă,—теççĕ машина çинче ларса пыракансем...

Нумаях пулмасть эпир каллех Кувакинăра пултăмăр. Кувакино çыннисем хăйсен яльне каллех сад-пахчаран пуян, илемлĕ тăвассишĕн тăрăшса ĕçленине куртăмăр.

Ялпа юнашăр юхса иртекен Ичикса шывĕ урлă каçсанах çамрăк йывăççем лартнă урам. Ял варринче, темиçе пĕчĕк пÿртсемпе лавккасем пулнă вырăнта, пысăк сад-пахчи тăваççĕ. Унта культурăпа кану паркĕ пулать. Учрежденисем, предприятисем, шкулсем умне улма-çырла йывăççисем лартаççĕ. Халĕ кунти Ленин ячĕне тăракан колхозри кашни кил вунăран пуçласа 40—50 улмуççи таран тата ытти тĕрлĕ улма-çырла йывăççисем нумай лартнă.

Кувакино—пирĕн республика Мордва АССР-ĕпе чикĕленсе тăракан район центрĕ. Вăл чугун çул станцинчен — Улатăртан çирĕм километрта. Район территорийĕ урлă Сăр шывĕ юхса иртет.

Чылай вăхăт вулăс центрĕ пулнă пулин те, Кувакино культура тата промышленность енĕпе ытти ялсенчен нимĕнпех те уйрăлса тăман. 1935 çулччен кунта пĕр промышленность предприятийĕ те пулман. Район центрĕ тунăранпа кунта вырăнти чĕртаварсенчен тĕрлĕ продукци туса кăларакан предприятисем ĕçлеме пуçланă. Халĕ кунти апат-çимĕç комбиначĕ—премĕксем, патока, варени тата ытти çимĕçсем туса кăларать, çĕрулми типĕтсе хатĕрлет. Сталин ячĕпе тăракан артель çулталăкра виçĕ пин кубометр таран суднăсем тумалли йывăç çурса хатĕрлет, сĕтел-пукан, урапа-çуна нумай туса кăларать. Кунта туса кăларакан продукци ытти районсене те чылай каять. «XIX лет Октября» артель тата промкомбинат колхозсем валли кирпĕч, хуçалăхра кирлĕ таварсем туса, кĕнетумтирсемпе атă-пушмаксем çĕлесе кăлараççĕ.

Революциччен фельдшер пункчĕ кăна ĕçленĕ ялта халĕ пысăк больница пур. Унта аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă вунă врач ĕçлет. Партипе правительство пулăшнипе юдашки çулсенче больница валли пысăк çурт, врачсем валли хваттерсем туса лартнă. Çитес кунсенчех рентген кабинечĕ ĕçлеме тытăнать.

Ял варринчи икĕ хутлă çуртсенче вăтам шкул вырнаçнă. Шкулта 585 ача вĕренет. 1938 çултанпа Х-мĕш класран 355 çын вĕрентсе кăларнă. Вĕсенчен чылайăшĕ, аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă хыççăн, халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче ĕçлеççĕ. Вăтам шкулта 26 учитель. Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ А. М. Кабаевская юлташ çак шкулта ĕçлет.

Район центрĕнче пысăк библиотека, ачасен библиотеки, клуб, киноустановка тата ыттисем те ĕçлеççĕ. Суту-илÿ, çыхăну ĕçĕсем те çулсеренех аталанса пыраççĕ. Район центрĕ пуçланнă чухне кунта пурĕ те пĕр магазин кăна пулнă, халĕ магазинсемпе ларексем 27. Магазинсенче, столовăйсенче кулленех халăх нумай пулать. Çитес кунсенче суту-илÿ ĕçĕ татах та лайăхланмалла. Çĕнĕрен сельмаг уçăççĕ, хуçалăхра кирлĕ таварсем сутмалли магазин валли çĕнĕ çурт, тăвар склачĕпе овощехранилище тăваççĕ.

Кувакинăри МТС хăватлă техникăпа пуянлансах пырать. Вăл пĕлтĕр колхозсене 18 тĕрлĕ ĕç туса панă пулсан, кăçал 23 тĕрлĕ ĕç тунă. Кăçал ялхуçалăхĕнчи тĕп ĕçсен 97,3 процентне МТС вăйĕпе тунă. Çак кунсенче машина-трактор станцийĕн кантурĕ валли çĕнĕ çурт туса пĕтерчĕç. Çитес çул станцие çĕнĕ участок çине куçараççĕ. Унта типовăй мастерской, машинăсем лартмалли сарай, нефтебаза, рабочисем пурăнмалли çуртсем пулаççĕ.

Район центрĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз çултан çулах тĕреклене пырать. Кăçал вăл сурăхсем валли пысăк вите туса пĕтерчĕ. Фермăсем хушшинче канат карса çул тунă. Çак кунсенче колхоз 56 киловатлă электростанци туянчĕ. Вăл колхозниксен килĕсене, обществăлла çуртсене пĕтĕмĕшпех электрификацилеме май парать.

Юлашки çулсенче Кувакино район центрĕн сăн-сăпачĕ чылай улшăнса çĕнелчĕ. Тĕп урамсене чул сарса тухнă, виçĕ çĕнĕ кĕпер тунă, учрежденисемпе предприятисем тата ĕççыннисем хăйсем валли пурăнмалли çĕнĕ çуртсем нумай лартнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Кувакино райисполкомĕн çурчĕ (сулахайра). Машина-трактор станцийĕн кантурĕ валли кăçал туса пĕтернĕ çурт (сылтăмра).

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Кувакино — Таван çĕршыва нумай вĕреннĕ ăста специалистсем сахал мар панă.

Кувакино район центрĕнчи ĕççыннисем Октябрьти Социализмла Аслă революци панă тивлетпе пуян та тулăх тата культурăллă пурăнаççĕ, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн хăйсен вăй-халне хĕрхенмесĕр ĕçлеме пулаççĕ.

Н. МИНИН.

Куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларассине ӳстерес тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе туса ирттермелли ӗҫсем ҫинчен

СССР Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министрӗ А. Н. КОСЫГИН юлташ Пӗтӗм Союзри ҫӑмӑл промышленность работникӗсен канашлӑвӗнче 1953 ҫулхи октябрӗн 29-мӗшӗнче тунӑ доклад*)

Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе совет халӑхӗ халӑх хуҫалӑхне аталантарас ӗҫре чаплӑ ҫитӗнӳсем турӗ. Пирӗн ҫӗршывӑн халӗ ӗнтӗ хӑватлӑ, техника тӗлӗшӗнчен чаплӑ йывӑр индустри пур. Вӑл социализмла экономикӑн тӗп никӗсӗ пулса тӑрать. Ҫак никӗс ҫинче промышленноҫӑн, транспортӑн тата ял хуҫалӑхӗн мӗнпур отраслӗсем йӑнӑшсӑр аталанса пырассӗ.

Халӗ ӗнтӗ, пирӗн ҫӗршывӑн хӑватлӑ индустриллӗ никӗс, тӗреклӗ колхозсем, хуҫалӑх строительствин мӗнпур отраслӗсенче хатӗрленӗ кадрсем пур чухне, йывӑр индустри пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе ӳссе пынӑ вӑхӑтра, ял хуҫалӑхне те, ҫӑмӑл тата апат-ҫимӗҫ промышленноҫне те пысӑкрах хӑвӑртлӑхсемпе аталантарса пыма пултаратпӑр. Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн V-мӗш сессийӗнче: партипе правительство ҫитес ҫывӑх 2—3 ҫул хушшинче халӑха промышленность тата апат-ҫимӗҫ таварӗсем ҫителӗклӗн тӑратмалла тӑвас тӗлӗшпе халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларассине татӑклӑн ӳстерме йышӑнчӗ, тесе пӗлтернине совет халӑхӗ пысӑк ҫӗкленӳпе йышӑнса илчӗ.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ ял хуҫалӑхне хӑвӑрттӑн ҫӗклентерес тата нумай енлӗн аталантарас тӗлӗшпе чылай пысӑк ӗҫсем туса ирттерме йышӑнчӗ. КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ «ССР Союзӗн ял хуҫалӑхне малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен» Н. С. Хрущев юлташ доклачӗ тӑрӑх йышӑннӑ постановленире ял хуҫалӑхӗн мӗнпур отраслӗсене татӑклӑн вӑйлатмалли ҫул-йӗрсем кӑтартса пачӗ.

Ял хуҫалӑхне малалла аталантарнӑ тата ӑна пӗтӗмӗшлӗн ҫӗклентернӗ никӗс ҫинче ҫитес ҫулсенче пирӗн ҫӗршывра халӑх валли апат-ҫимӗҫ тата куллен кирлӗ таварсем туса кӑларакан промышленность валли чӗртавар ҫителӗклӗ пулса тӑмалла. Ҫак таварсене туса кӑларассине ӳстерес тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен союзлӑ-республикӑллӑ министерствине туса хунӑ.

1953 ҫулхи октябрӗн 10-мӗшӗнче СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларассине ӳстерес тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе пирӗн промышленноҫӑн уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан программӑлла постановлени йышӑнчӗҫ. Асӑннӑ постановленире ҫапла каланӑ:

«Рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мӗнпур совет ҫыннисен материальнӑй пурнӑҫне малалла лайӑхлатас тӗлӗшпе тӑракан тӗп задачӑна шута илсе, ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ ҫапла тума кирлӗ тесе шутлассӗ: ҫӗршывра куллен кирлӗ промышленность таварӗсем ҫителӗклӗ пулмалла тӑвас тата халӑха ҫак таварсемпе тивӗҫтерессине хӑвӑрт вӑйлатас шутпа ҫитес 2—3 ҫул хушшинче ҫӑмӑл промышленноҫа аталантарас ӗҫе пур майсемпе те хӑвӑртлатмалла».

Ҫак постановлени тӑрӑх пирӗн пилӗк ҫуллӑх плана: пурҫӑн пир-авӑр енӗпе — виҫӗ ҫулта, ҫӑм пир-авӑр, ҫыхса тунӑ тата ҫӗленӗ изделисем, сортлӑ савӑт-сапа, ҫӑматӑ, пир-авӑр галантерейи енӗпе — тӑватӑ ҫулта тултармалла. Пирӗн уйрӑмах туса кӑларакан таварсен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе ответлӑ задачӑсене татса памалла. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн V-мӗш сессийӗнче халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларакан промышленность пирки: эпир халӑха кирлӗ таварсен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе кая юлнӑ, тесе тӗрӗс кӑтартса пачӗ. Пирӗн ҫак ӗҫе чӑннипех лайӑхлатмалла. Продукци пахалӑхне лайӑхлатас тата унӑн ассортиментне нумайлатас ыйтусем пирӗн промышленноҫри мӗнпур работниксен тӗп тимлӗхӗнче тӑмалла.

Пирӗн яланах ҫакна асра тытас пулать: изделисен ассортиментне пуянлатас, изделисене тулаш енчен илемлетес тӗлӗшпе промышленность умне кӑларса тӑратакан ыйтусем пӗрмай ӳссе пырассӗ. Потребительсен ыйтӑвӗсене яланах шута илмелле тата вӗсене пур енчен те тӗпчесе вӗренмелле, кирлӗ тата пуян ассортимент туса кӑларассине, паха та илемлӗ изделисем туса кӑларассине вӑхӑтра ҫӗнетсе пымалла, халӑх пуринчен ытларах ыйтакан пысӑк пахалӑхлӑ продукци туса кӑларасси халӑхӑн ӳссе пыракан ыйтӑвӗсемпе кӑмӑлне тивӗҫтерме пултартӑр.

Ҫитес 2—3 ҫул хушшинче Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерстви тӑрӑх паллӑрах куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларассине ҫакӑн пек ӳстерсе пыма палӑртнӑ:

ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗ 1954 ҫулта 5 миллиард та 400 миллион метр, 1955 ҫулта—6 миллиард та 100 миллион метр туса кӑлармалла, урӑхла каласан икӗ ҫулталӑк хушшинче ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗ туса кӑларасси 1 миллиард метр ӳсет;

ҫӑм пир-авӑр туса кӑларасси 1954 ҫулта 225 миллион метр, 1955 ҫулта — 250 миллион метр, 1956 ҫулта—290 миллион метр, урӑхла каласан виҫӗ ҫул хушшинче ҫак пир-авӑрсене туса кӑларасси пӗр хут ҫурӑ ӳсет;

пурҫӑн пир-авӑр 1954 ҫулта 485 миллион метр, 1955 ҫулта—550 миллион метр тата 1956 ҫулта—650 миллион метр туса кӑлармалла, урӑхла каласан, ҫак пир-авӑрсене туса кӑларасси виҫӗ ҫул хушшинче пӗр хут ҫурӑ ытла ӳсет, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 5 хут ытла ӳсет.

Сӑран атӑ-пушмак туса кӑларасси пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе ӳссе пырать: 1953 ҫулта эпир 200 миллион мӑшӑр туса кӑларатпӑр пулсан, 1956 ҫулта 290 миллион мӑшӑр, е. 1953 ҫулхинчен 45 процент ытларах туса кӑларатпӑр.

Ҫӗвӗ изделийӗсем туса кӑларасси чылай ӳсет. 1954 ҫулта ҫӗвӗ изделийӗсем 29 миллиард тенкӗлӗх, 1955 ҫулта—35 миллиард тенкӗлӗх тата 1956 ҫулта—40 миллиард тенкӗлӗх туса кӑлармалла пулать, урӑхла каласан, виҫӗ ҫул хушшинче пӗр хут ҫурӑ ытла ӳсет.

Ҫак пысӑк программӑна пурнӑҫлама пирӗн промышленноҫри мӗнпур работниксем пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлени, производствӑна чылай ӳстерни, промышленноҫа малалла улӑштарса ҫӗнетни кирлӗ. Пирӗн производство хӑвачӗпе туллин усӑ курмалла, промышленноҫри мӗнпур резервсене тупса палӑртмалла, хальхи предприятисене реконструкцилес тата кучухнехи техника никӗсӗ ҫинче ҫӗнӗ предприятисем тӑвас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттермелле пулать.

Пир-авӑр нумайрах тӗртсе кӑлармалла тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатмалла

Пилӗкҫуллӑхсем вӑхӑтӗнче ҫӗр мамӑк пир-авӑр промышленноҫӗнче ҫӗнӗрен 30 пысӑк фабрика туса лартнӑ, киввисенчен 50 фабрикӑна яхӑн урӑхлатса ҫӗнетнӗ. Ҫав вӑхӑтрах предприятисене ҫӗнӗ техникӑпа хӗҫпӑшаллантарнӑ. Ҫавна пула тата оборудованипе усӑ курасси лайӑхланнине, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳснине пула ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗ ытларах тӗртсе кӑларма пуҫланӑ, унӑн ассортиментне нумайлатнӑ тата пахалӑхне лайӑхлатнӑ. Ҫапах та пирӗн промышленность нумай йышши пир-авӑр енӗпе халӑх ыйтнисене ҫителӗклӗ тивӗҫтерейместь. Ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗ рынокра ҫителӗклӗ пулсан та, ворсовӑй пир-авӑр (сӑмахран, вельветсем), меланжевӑй тата чӑнар тӗслӗ пир-авӑр, фланельсем, байксем, замшсем, вельветон. кӗпесем, плащсем ҫӗлемелли пӗтӗрнӗ ҫипрен тӗртнӗ пир-авӑр, пикейнӑй ҫивиттисем (одеялсем), пукансемпе дивансем ҫине пустармалли пир-авӑр, тӗрлемелли ҫипсем тата ытти япаласем ҫитмессӗ.

Ҫӗр мамӑк пир-авӑр промышленноҫӗнчи работниксен задачи ҫакӑн пек: партипе правительство решенийӗсенче каланӑ тӑрӑх пур йышши ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗ, уйрӑмах дефицитлӑ пир-авӑрсем туса кӑларассине хӑвӑрт ӳстермелле, вӗсене халӑх ыйтнине тивӗҫтермелӗх тӗртсе кӑлармалла. Ҫак задачӑна ӑнӑҫлӑ татса пама пирӗн производство хӑватне пысӑклатмалла, производствӑн технологине лайӑхлатас тата уйрӑмах хатӗр япаласене тасатса тата сӑрласа хитрелетес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене пурнӑҫламалла. Пир-авӑра тасатса сӑрлакан фабрикӑсен хӑвачӗсене пысӑклатас ӗҫе ҫывӑх вӑхӑтрах туса пӗтермелле.

Фабрикӑсен хӑвачӗсемпе тӗрӗс тата туллин усӑ курни продукци туса кӑларассине хӑвӑртрах та хӑвӑрт ӳстерес ӗҫе татса паракан услови пулса тӑрать. Ҫӗр мамӑк пир-авӑр промышленноҫӗнче оборудование халӗ иртнӗ ҫулхисенчен туллинрех ӗҫлеттерессӗ. Анчах, темиҫе сменӑпа ӗҫлессӗ пулин те, пирӗн халӗ те пир-авӑр туса кӑларассине малалла ӳстерме резервсем чылай пур-ха. Малта пыракан чылай фабрикӑсем, сӑмахран, Ленин ячӗпе тӑракан фабрика, Ярославльри корднӑй фабрика, Красин ячӗпе тӑракан фабрика тата ыттисем те ҫак ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тума пултарчӗҫ. Анчах ҫип арлакан тата пир-авӑр тӗртекен 344 фабрикӑран 141 предприятире хӑватсемпе усӑ курнин коэфициенчӗ вӑтам шайран каярах. Уйрӑмах хӑйсен хӑвачӗсемпе Ликинскри фабрикӑра, Карл Либкнехт ячӗпе тӑракан тата «Вперед» фабрикӑсенче питех те ҫителӗксӗр усӑ курассӗ. Ореховӑри, Глуховӑри тата Вышневолоцкри комбинатсенче те, ҫавӑн пек пысӑк предприятисенче те, хӑватсемпе усӑ курнин коэфициенчӗ питех те ҫителӗксӗр.

Пирӗн тата ҫип таталнисем нумай пулакан, технологие час-часах пӑсакан тата ӗҫлемесӗр тӑма тивнӗ пирки оборудованипе начар усӑ куракан предприятисем халӗ те нумай-ха. Ҫак пысӑк ҫитменлӗхсене пӗтермелле, кая юлакан предприятисенче кирлӗ пек йӗрке тумалла, вӗсене малта пыракансем пек ӗҫлекен тумалла, малта пыракан предприятисенче вара оборудованипе татах та лайӑхрах усӑ курассине ӗҫе кӗртсе пымалла.

Йӗтӗн пир-авӑр промышленноҫӗ умӗнче пысӑк задачӑсем тӑрассӗ. Унӑн хальхи хӑвачӗсем йӗтӗн пир-авӑр туса кӑларассине ӳстерме май парассӗ. Пирӗн йӗтӗнӗн мӗнпур ресурсӗсене 1954 ҫулта питех те дефицитлӑ йӗтӗн таварӗсем, коломянка, простынисем тумалли пир, чӗрӗ ҫӳхе пир-авӑр, брезент, скатертьсем, ҫивиттисем, алшӑллисем, ҫенҫе простынисем тӗртсе кӑларма парас пулать.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ йӗтӗн тата кантӑр акса тӑвас ӗҫе пур майсемпе те аталантарма кирлине кӑтартса пачӗ. Пирӗн промышленность часах йӗтӗн сӳсӗ, кантӑр сӳсӗ, кенаф, канатник тата джут кирлӗ чухлӗ илсе тӑма пуҫлать. 1953 ҫулта йӗтӗн пир-авӑр 280 миллион метр тӗртсе кӑларатпӑр пулсан, 1955 ҫулта ҫакӑн пек пир-авӑр 400 миллион метр тӗртсе кӑлармалла. Ҫак задание пурнӑҫлама ҫӗнӗрен тӑвакан нумай предприятисенче производство хӑвачӗсене вӑхӑтра ӗҫе кӗртес пулать.

Ҫитес виҫӗ ҫул хушшинче ҫӑм пир-авӑр промышленноҫӗ вӑйлӑ аталанать. Продукци туса кӑларасси чылай ӳсмелле, вӑл халиччен нихҫӑн пулман хисеп чухлӗ продукци туса кӑлармалла. Ҫакна калани те ҫителӗклӗ: продукци туса кӑларасси юлашки виҫӗ ҫул хушшинче мӗн чухлӗ ӳснӗ, 1954 ҫулта, пӗр ҫул хушшинче, ҫавӑн чухлӗ ӳсет.

Ҫӑм пир-авӑр промышленноҫӗнчи производство резервӗсемпе халӗ те ҫителӗксӗр усӑ курнине палӑртмалла. Главшерсть (Гусевпа Балясников юлташсем) тата Росглавшерсть (Сосинпа Пантелькин юлташсем) кая юлакан предприятисен ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе питех те ҫителӗксӗр ӗҫлессӗ, малта пыракан фабрикӑсен — Купавинӑри фабрикӑн, Обуховӑри Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑн тата ыттисен опытне кая юлакан предприятисене кусармассӗ.

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗн решенийӗпе ҫӑм пир-авӑр промышленноҫӗнчи ҫӗнӗ строительствӑн тата халӗ ӗҫлекен предприятисене урӑхлатса ҫӗнетес ӗҫӗн пысӑк программине ҫирӗплетнӗ. Хальхи вӑхӑтра виҫӗ камвольнӑй пысӑк комбинат—Минскри, Краснодарти тата Свердловскри комбинатсене тӑвассӗ. Иваново, Канск, Монино. Чернигов хулисенче камвольнӑй комбинатсем, Фряновӑра ҫип арлакан фабрика, Краснодарти комбинатӑн виҫҫӗмӗш черетне тата ыттисене ҫӗнӗрен тума проектсем тӑвас ӗҫе, чылай объектсенче строительствӑна пуҫлама хатӗрленес ӗҫе тата кивӗ предприятисене пысӑклатас ӗҫе тытӑннӑ. Ҫав предприятисене пурне те ӗҫе ярсан, камвольнӑй ҫӑм пир-авӑр туса кӑларасси ҫулталӑкра 75 миллион метр чухлӗ ӳсет. Ҫавӑн чухлӗ ӳсни кӑна вӑрҫӑчченхинчен икӗ хут ытларах камвольнӑй пир-авӑр туса кӑларма май парать. Ҫитес икӗ ҫул хушшинче ҫӑм пир-авӑр промышленноҫӗнче 29 ҫӑм пир-авӑр фабрикине, ҫӑма малтанхи хут тасатса хатӗрлекен 6 фабрикӑна урӑхлатса ҫӗнетмелле тата ҫӗнӗ фабрикӑсем чылай лартмалла.

Ассортимента нумайлатас тата продукци пахалӑхне малалла лайӑхлатас тӗлӗшпе нумай ӗҫлемелле пулать. Ҫӑм пир-авӑр ассортименчӗ юлашки ҫулсенче чылай пысӑкланчӗ тата пахалӑхӗ те лайӑхланчӗ. Анчах кӑҫал ҫӑм пир-авӑр пӗрремӗш сортпа туса кӑлармалли плана пӗтӗмӗшпе тултарнӑ пулсан та, 15 предприяти, ҫав шутра Ростокинӑри фабрика, Свердлов ячӗпе тӑракан фабрика, Арженрипе Верхозимри фабрикӑсем заданисене тултараймарӗҫ. Пирӗн пӗрремӗш сортлӑ продукци туса кӑлармалли задание кашни предприяти тултармалла тӑвас пулать. 1954 ҫулта таса ҫӑмран тунӑ камвольнӑй ҫӑм пир-авӑр туса кӑларасси 1953 ҫулхинчен 2,3 хут, ҫав шутра таса ҫӑмран костюмсем ҫӗлемелли пир-авӑр туса кӑларасси 3,5 хут ӳсмелле. Таса ҫӑмран ҫӳхе пустав туса кӑларасси 2,3 хут ӳсет. Ҫакӑн пек пир-авӑр: бостон, габардин, «Люкс», «Метро», «Ударник» йышши трико, «Велюр», «Дели», «Ленинградский», «Московский», «Столичнӑй» йышши драпсем туса кӑларассине уйрӑмах нумай ӳстерме палӑртнӑ.

Ҫӑм пир-авӑр промышленноҫӗн ҫултан-ҫул ҫӑм ресурсӗсем нумайрах та нумайрах пулассӗ. Вӑл ҫав ресурссемпе тирпейлӗ хуҫа пек усӑ курма, ҫапла майпа халӑх валли пысӑк пахалӑхлӑ тата хитре ҫӑм пир-авӑр нумай туса пама тивӗҫлӗ.

Пурҫӑн пир-авӑр промышленноҫӗнче производство хӑвачӗсене тӑтӑшах ӳстерсе пырас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ туса ирттернӗ, пурҫӑн пир-авӑр тӗртекен тата сӑрласа хитрелетекен ҫӗнӗ предприятисем—Маргелан, Ош, Чкалов хулисенчи, Киевпа Дарницӑри комбинатсене тунӑ, Ереванра пурҫӑн пир-авӑр тӗртекен фабрика, Ленинабадри комбинатра пурҫӑн пир-авӑр тӗртекен иккӗмӗш фабрика лартнӑ. Наро-Фоминскри фабрикӑра, Киржачри, Кутаисири, Нухийри пурҫӑн пир-авӑр комбиначӗсене, Каунас хулинчи пурҫӑн пир-авӑр тӗртекен фабрикӑна, Рига хулинчи пурҫӑн пир-авӑр комбинатне тата ыттисене те чылай пысӑклатнӑ.

Пурҫӑн пир-авӑр предприятийӗсене Тӑван ҫӗршывра туса хатӗрленӗ кучухнехи технологи оборудованийӗпе пуянлатни ассортимента чылай пысӑклатма тата 1940 ҫулхипе танлаштарсан кӗпесем ҫӗлеме натуральнӑй пурҫӑнран креповӑй пир-авӑр туса кӑларассине 5,5 хут, искусственнӑй пурҫӑнран креповӑй пир-авӑр туса кӑларассине 4 хут ытларах ӳстерме май пачӗ. Тӗрлӗ тӗслӗ ӳкерчӗксем ҫапнӑ пурҫӑн пир-авӑр туса кӑларассине 13 хут ӳстернӗ. Пурҫӑн пир-авӑр промышленноҫӗн производство шайӗ енӗпе илсен, вӑл кӑҫал пурҫӑн пир-авӑр 1940 ҫулхинчен ултӑ хут нумайрах туса кӑларать, производство шайӗ енӗпе пилӗк ҫуллӑх планра 1955 ҫулта туса кӑларма палӑртнӑ шая халех ҫитнӗ ӗнтӗ.

Ҫитес виҫӗ ҫул хушшинче пурҫӑн пир-авӑр туса кӑларасси, кӑҫалхипе танлаштарсан, пӗр хут ҫурӑ ытла ӳсет.

Халӑх ытларах ыйтакан пурҫӑн пир-авӑра туса кӑларасси уйрӑмах нумай ӳсет. Сӑмахран, 1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, натуральнӑй пурҫӑнран креповӑй пир-авӑр туса кӑларасси икӗ хут ҫурӑ, пурҫӑнран ворсовӑй пир-авӑр (плюш, бархат) туса кӑларасси икӗ хут ытла, штапельнӑй пир-авӑр туса кӑларасси вунултӑ хут ӳсмелле.

Туса кӑларакан пурҫӑн пир-авӑрӑн пахалӑхне малалла лайӑхлатса пыма пирӗн кӗске срокрах пурҫӑн пир-авӑр предприятийӗсенче пурине те пир-авӑра тасатса хитрелетмелли, пахалӑхне лайӑхлатмалли: ҫемҫе, ҫунӑ хыҫҫӑн сахал ларакан, шыв сахал витекен, ҫирӗп тумалли тата илемлӗ сӑрламалли ҫӗнӗ меслетсене анлӑн ӗҫе кӗртсе пымалла. Пурҫӑн пир-авӑр ҫине ҫапма 1953 ҫулта ҫӗнӗ ӳкерчӗксем 800 кая мар хатӗрлемелле тата костюмсемпе кӗпесем ҫӗлеме ҫӗнӗрен 25 йышши пурҫӑн пир-авӑр туса кӑларма тытӑнмалла.

Халӗ ӗҫлекен оборудованипе туллинрех усӑ курса, пурҫӑн пир-авӑр промышленность работникӗсен продукци туса кӑларассине чылай ӳстермелле. Ҫакна палӑртас пулать: Узбек, Таджик, Азербайджан, Грузи тата Украина союзлӑ республикӑсен Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министрӗсем оборудованипе усӑ курас ӗҫе, производствӑн технологи режимне тата культурине тытса пырас, рабочисен квалификацине ӳстерес ыйтусем ҫине кирлӗ пек пӑхмассӗ-ха.

Пурҫӑн пир-авӑр промышленноҫӗн производство хӑвачӗсене пысӑклатас тӗлӗшпе пирӗн умма пысӑк задача лартнӑ. Ҫывӑхри 2—3 ҫул хушшинче пурҫӑн пир-авӑр промышленноҫӗн 11 предприятине урӑхлатса ҫӗнетмелле тата ҫӗнӗрен 8 предприяти лартмалла. Ҫаксене туни пурҫӑн пир-авӑр промышленноҫне пурҫӑн пир-авӑр туса кӑлармалли плана пӗтӗмпех пурнӑҫлама май парать.

Ҫирӗп тата хитре атӑ-пушмак нумайрах туса кӑларар

Атӑ-пушмак, тир-сӑран промышленноҫӗнче тата сӑран вырӑнне усӑ курмалли япаласем тӑвакан предприятисенче вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче производство хӑвачӗсене тӑтӑшах ӳстерес, технологи процесӗсене лайӑхлатас тата вӑй нумай ыйтакан ӗҫсене автоматизацилес тата механизацилес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тунӑ. Ҫавна пула 1953 ҫулта 1950 ҫулхинчен 36 миллион мӑшӑр ытларах атӑ-пушмак туса кӑларассӗ, урӑхла каласан, 22 процент ӳсет, ҫав шутран: сӑрантан тунӑ атӑ-пушмак туса кӑларасси пӗр хут ҫурӑ ытла, моделлӗ пушмаксем туса кӑларасси тӑватӑ хут ытла, атӑсем туса кӑларасси икӗ хут, спорт атӑ-пушмакӗ туса кӑларасси 1,8 хут ӳсет.

Атӑ-пушмак туса кӑларасси чылай ӳснӗ пулин те, пирӗн промышленность рантлӑ атӑ-пушмак, ачасем валли сӑран тӗплӗ атӑ-пушмак, хӗрарӑмсем валли лутра кӗлеллӗ пушмак халӑх ыйтнине тивӗҫтермелӗх туса кӑлараймасть-ха, ялсенче атӑсем ҫитменни хытӑ сисӗнет. Хальхи вӑхӑтра халӑх нумай ыйтакан атӑ-пушмаксем туса кӑларас тӗлӗшпе производствӑна урӑхлатса ҫӗнетес ӗҫе промышленность питех те вӑраххӑн пурнӑҫласа пырать. Сӑмахран, Ленинградри «Скороход» фабрикинче арҫынсем валли ҫулла тӑхӑнмалли сӑран пушмаксем туса кӑларма ҫӗнӗ потока ӗҫе кӗртме ҫулталӑк ҫурӑ иртнӗ. Коминтерн ячӗпе тӑракан тата Кунцеворӑ тир-сӑран комбиначӗсенче лакпа сӑрланӑ сӑран туса кӑларакан ҫӗнӗ цехсем тума тытӑннӑранпа икӗ ҫула яхӑн иртнӗ, вӗсене халӗ те туса пӗтермен-ха. Ҫак ҫитменлӗхсем чылай предприятисен руководителӗсем саврӑнӑҫсӑр ӗҫленипе тата атӑ-пушмакпа тир-сӑран промышленноҫӗн главнӑй управленийӗсем ӗҫ мӗнле пынине пӑхмасӑр тӗрӗслесе тӑниччен килессӗ.

Пирӗн предприятисем техникӑпа пуян. Вӗсен ҫирӗп тата хитре атӑ-пушмак туса кӑларма майсем пур. Халӑха кирлӗ атӑ-пушмак тӑвас ӗҫе вӑхӑтра организацилеме ҫав майсемпе туллин усӑ курас пулать. Чылай предприятисенче производствӑна атӑ-пушмак тума хатӗрлес ӗҫе, чӗртавар, материалсем, фурнитура тӑратас ӗҫе япӑх организациленӗ. Ҫавна пула палӑртнӑ ассортимент тӑрӑх атӑ-пушмак туса кӑлармалли план пурнӑҫланса пымасть, вӗсен пӗр пайне кивелнӗ, пӗрешкел модельсем тӑрӑх тӑвассӗ, вӗсене хитре тумассӗ, тулаш енӗ кӑмӑла каймасть.

Атӑ-пушмак промышленноҫӗ умне ответлӑ задачӑсем лартнӑ. Атӑ-пушмак туса кӑларассине ӳстерсе 1954 ҫулта 20 миллион мӑшӑр нумайрах, 1955 ҫулта—тата 44 миллион мӑшӑр нумайрах туса кӑлармалла. Эпир рантлӑ атӑ-пушмак туса кӑларассине икӗ хут ӳстерме, 1954 ҫултах шкул ачисем валли сӑран тӗплӗ атӑ-пушмак ҫӗлесе кӑларассине пӗр хут ҫурӑ, лакпа сӑрланӑ сӑрантан, замшран тата шурӑ шевроран атӑ-пушмак ҫӗлесе кӑларассине виҫӗ хут ытла ӳстерме тивӗҫлӗ. Моделлӗ лутра кӗлеллӗ тата вӑтам кӗлеллӗ пушмаксем ҫӗлесе кӑларассине чылай ӳстермелле, ӑшне ӑшӑ тытакан пир хунӑ, ҫӑмлӑ тирпе вершлесе илемлетнӗ, фетртан тунӑ атӑ-пушмак, ватӑрах ҫынсем валли кирлӗ атӑ-пушмак нумайрах туса кӑлармалла, килте тӑхӑнса ҫӳреме лайӑх тата хитре ҫӗнӗ йышши атӑ-пушмак тума тытӑнмалла, юфтьрен атӑсем ҫӗлекен производствӑна пысӑклатмалла.

Пирӗн атӑ-пушмак моделӗсене тӑвас ӗҫе лайӑхлатмалла, 1954 ҫулта ҫӗнӗ модельсем пинрен кая мар хатӗрлемелле, ҫав модельсем тӑрӑх производствӑра атӑ-пушмак ҫӗлемелле тӑвас пулать. Атӑ-пушмак ҫӗлекен предприятисен работникӗсем ҫитес икӗ-виҫӗ уйӑх хушшинче атӑ-пушмака якатса хитрелетес тӗлӗшпе ҫирӗплетнӗ пӗр пек технологие производствӑра пӗтӗмпех пурнӑҫласа пыма тивӗҫлӗ, тир-сӑран промышленность работникӗсен тир-сӑран тӑвас, ӑна якатас ӗҫе тӗпренех лайӑхлатмалла, ҫутӑ тӗслӗ хытӑ сӑран, шурӑ тӗслӗ хромовӑй сӑран, лакпа сӑрланӑ сӑран туса кӑларассине ӳстермелле тата касса йӗркеленӗ сӑрансен пахалӑхне лайӑхлатмалла.

Атӑ-пушмак туса кӑларас ӗҫе хӑвӑрт вӑйлатма хальхи мӗнпур резервсене пӗтӗмпех мобилизацилесе пӗрлех, ҫывӑх ҫулсенче халӗ ӗҫлекен тир-сӑран заводӗсемпе атӑ-пушмак фабрикисене урӑхлатса ҫӗнетес тата ҫӗнӗ заводсемпе фабрикӑсем лартас ӗҫе анлӑ сарас пулать. 1954—1955 ҫулсенче атӑ-пушмак ҫӗлекен 68 фабрикӑна тата тир-сӑран тӑвакан 48 завода урӑхлатса ҫӗнетмелле. Тир-сӑран тӑвакан тата атӑ-пушмак ҫӗлекен ҫӗнӗ предприятисем нумай лартма тытӑнмалла. Эпир малта пыракан технологие никӗсе хурса, лайӑхлатнӑ оборудованипе ытларах усӑ курса, тата производствӑра конвейерсемпе ӗҫлессине никӗсе хурса предприятисене урӑхлатса ҫӗнететпӗр. Ҫакӑ вара продукци туса кӑларассине ӳстерме кӑна мар, атӑ-пушмакӑн пахалӑхне чылай лайӑхлатма та, унӑн ассортиментне нумайлатма та май парать.

Ҫӗвӗ ҫӗлекен, трикотаж тата тир промышленноҫӗ умӗнче тӑракан задачӑсем

Революциччен Российӑра ҫӗвӗ ҫӗлекен фабрика промышленноҫӗ пулманпа пӗрех, ӑна Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче ҫеҫ тунӑ. Халӗ ҫав промышленноҫра 250 пин ҫынна яхӑн ӗҫлет. Пирӗн халӗ ҫӗвӗ ҫӗлекен фабрикӑсем 400 ытла шутланассӗ, вӗсем хушшинче пысӑккисем, 3 пин ҫын таран ӗҫлекеннисем те пур. Ҫӗвӗ ҫӗлекен промышленность пур енчен те механизациленнӗ, малта пыракан техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ промышленность пулса тӑчӗ. Кӑҫал ҫӗвӗ ҫӗлекен промышленность 25 миллиард тенкӗлӗх, 1950 ҫулхинчен 7 миллиард тенкӗлӗх ытла продукци туса кӑларать. Ассортимент та нумайланнӑ, ҫӗнӗ изделисене массӑллӑн тӑвасси пуҫланнӑ.

Ҫӗвӗ ҫӗлекен промышленность енӗпе продукци туса кӑларасси нумай ӳснӗ пулин те, производство халӑх ыйтнинчен юлса пырать. Ҫакӑ вӑл ҫӑм пир-авӑртан ҫӗленӗ пальто, костюмсем тата искусственнӑй пурҫӑнран ҫӗленӗ ача-пӑча тумӗпе кӗпе-йӗмсем енӗпе уйрӑмах палӑрать. Хитре пальтосемпе костюмсем, хӗрарӑмсемпе ачасем валли тӗрлесе тунӑ тата хитрелетсе тунӑ изделисем те сахал ҫӗлесе кӑларассӗ. Моделлӗ тумтирсем ҫӗлес ӗҫ те чылай юлса пыни палӑрать. Илемлӗ те тӗрлӗ модельсем тӑвасси юлса пырать, йышӑннӑ модельсем тӑрӑх ҫӗлесси хӑвӑрт пурнӑҫланса пымасть.

Ульяновскри Горький ячӗпе тӑракан. Армавирти, Одессӑри, Тбилисири 1-мӗш номерлӗ, Каменец-Подольскри фабрикӑсем туса кӑларакан продукци пахалӑхӗ пирки потребительсем енчен пӑшӑрханасси чылай пулкалать. Унти предприятисенче тата ытти хӑшпӗр ҫӗрте те пӗрпӗр детальсене кирлӗ пек туса ҫитермессӗ, изделисен подкладкисене тата фурнитурисене кирлӗ материалран тумассӗ, ҫавӑн пирки вара тумтир япӑх пек курӑнать. Главшвейпром руководителӗсем (Лагуткин тата Кириллов юлташсем) продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн ҫителӗксӗр кӗрешессӗ, юлса пыракан предприятисене мала кӑларас тӗлӗшпе нимӗн те тумассӗ, лайӑх ӗҫлекен фабрикӑсен опытне сарасси ҫине ҫителӗклӗ ҫаврӑнса пӑхмассӗ.

Ҫӗвӗ ҫӗлекен промышленноҫра ӗҫлекенсем 1954 ҫулта 29 миллиард тенкӗлӗх продукци туса кӑларма тивӗҫлӗ. 1953 ҫулхипе танлаштарсан вӑл 16 процент ытларах пулать. Пуринчен ытларах ҫӑм пир-авӑртан ҫӗленӗ пальто, костюмсем, шӑлаварсем, арҫынсем валли пурҫӑн кӗпесем туса кӑларасси ӳсет. Арҫынсемпе хӗрарӑмсем валли ҫӑм пир-авӑртан ҫӗнӗ те кӑткӑс модельсем тӑрӑх тата лайӑхлатнӑ конструкци тӑрӑх ирӗклӗ формӑллӑ костюмсемпе пальтосем туса памалла, таса ҫӑм пир-авӑртан тата пурҫӑнран ҫӗленӗ изделисене якатса лайӑхлатас тӗлӗшпе уйрӑм операцисене хушмалла пулать.

Халӑх валли эпир тӗрлӗ ассортиментлӑ паха тата илемлӗ тумтирсем ҫӗлесе пама тивӗҫлӗ, потребитель хӑй ҫулне тата кӑмӑлне кура илмо пултартӑр, ӗҫе ҫӳремелли, килте, праҫникре, каҫхине тӑхӑнмалли тата спорт валли тумтирсем пулччӑр. Правительство йышӑннӑ тӑрӑх, 1954 ҫулта ҫак хуласенче—Вильнюсра, Алма-Атара, Кишиневра, Львовра тата Куйбышевра ҫӗнӗрен модель ҫурчӗсем уҫӑлассӗ. Модельсен ҫурчӗсем нумайрах уҫни тата вӗсене художниксем, модельерсем, конструкторсем ярса ҫирӗплетни потребительсен ыйтӑвӗсене ытларах тивӗҫтерме, ҫавӑн пекех тата тумтирсенче нацилле колорита палӑртма май парать.

Ҫитес ик-виҫ ҫул хушшинче пирӗн ҫӗвӗ ҫӗлекен ҫӗнӗрен 50 фабрика лартса ӗҫе ямалла пулать, ӗҫлекен фабрикӑсенчен 87 фабрикӑна ҫӗнетмелле. Ҫак ӗҫсем ҫӗвӗ ҫӗлекен промышленноҫра ӗҫлекенсене вӗсем умне партипе правительство лартнӑ задачӑсене чыслӑн пурнӑҫа кӗртме пулӑшӗҫ.

Трикотаж промышленноҫӗнче ӗҫлекенсен те хӑйсен ӗҫне нумай лайӑхлатмалла пулать. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн ҫак отраслӗри производство оборудованине чылай ҫӗнетнӗ. Коттон машинисен паркӗ 10 хут, ҫыхакан машинӑсен паркӗ—14 хут ӳснӗ, носки тата чӑлха ҫыхакан паха автоматсем нумай лартнӑ.

Ҫӗнӗ техникӑна ӗҫе янӑ май продукцин профилӗ те улшӑннӑ, ассортимент та чылай лайӑхланнӑ. Анчах трикотаж промышленноҫӗ трикотаж изделийӗсем енӗпе халӑх ыйтнине тивӗҫтерейместь. Коттоннӑй чӑлхасем, вискозаран ҫыхнӑ кӗпе-йӗмсем, капрон ҫиппинчен ҫыхнӑ чӑлхасем, мерсеризациленӗ ҫӗр мамӑк чӑлхасем, ҫыхса тунӑ материалран ҫӗленӗ кӗпесем сахал туса кӑларассӗ. Эпир ҫитес икӗ ҫул хушшинче трикотаж изделийӗсене туса кӑларассине тӗпрен ӳстерме тата ассортимента чылай анлӑлатма тивӗҫлӗ.

1953—1954 ҫулсенче предприятисене реконструкцилес тата ҫӗнӗ техникӑпа пуянлатас тӗлӗшпе чылай ӗҫлемелле пулать. Ҫакӑн пек задача тӑрать: ҫав ӗҫсене май пур таран кӗске срокра тата производствӑна чармасӑр туса ирттермелле. 1954—1956 ҫулсенче ҫӗнӗ предприятисем туса ӗҫе янипе трикотаж промышленноҫӗн хӑватне нумай ӳстерме палӑртнӑ. 1955 ҫулта пирӗн Вышний Волочок хулинче ҫыхса тунӑ пир тӑвакан пысӑк фабрикӑна ӗҫе ямалла, унсӑр пуҫне ҫӗнӗрен ҫичӗ фабрика тӑвас ӗҫе вӑйлатса пымалла. вӗсенчен Шупашкар, Черниковск, Омск тата Сталинград хулисенчи фабрикӑсем чи пысӑккисем шутланассӗ.

Трикотаж промышленноҫӗ умне лартнӑ пысӑк задачӑсем Главтрикотаж начальникне Соколов юлташа тата главнӑй инженер Надежина юлташа промышленноҫа ертсе пырассине лайӑхлатма, ӗҫе тӑтӑшах тишкӗрсе пырса предприятисен ӗҫӗнче палӑракан ҫитменлӗхсене пӗтерсе пыма хушассӗ.

Пирӗн ҫӗршывра тир изделийӗсем туса кӑларасси ҫултан-ҫул ӳсет. 1940 ҫулхипе танлаштарсан, вӗсене эпир халӗ икӗ хут ҫурӑ ытларах. 1950 ҫулта кӑларнинчен 60 процент ытларах туса кӑларатпӑр.

Анчах та тиртен тунӑ изделисем халӑх ыйтнине тивӗҫтерессине инҫе-ха, халӑх ыйтӑвӗ татах ӳссе пырать. Ҫапла пулин те Главмех руководителӗсем Илюшин тата Клочков юлташсем чӗртаварпа лайӑхрах усӑ курас тата тиртен тунӑ продукци ытларах туса кӑларас тӗлӗшпе ҫителӗклӗ мера йышӑнмассӗ. 1954 ҫулхи план тӑрӑх ҫак промышленность умне ҫакӑн пек задача лартнӑ: ҫемҫе ҫӑмлӑ тиртен тунӑ мантосемпе ача-пӑча валли пальтосем чылай ытларах туса кӑлармалла, ҫуха тирӗсене туса кӑларассине вӑйлатмалла, тӗрлӗ тӗслӗ тата лайӑх сӑрлӑ ҫуха тирӗсем тумалла, тӗрлӗ чӗртаварсенчен продукци туса кӑларассине организацилемелле.

Пирӗн умра ҫакӑн пек ӗҫсем тӑрассӗ: Хусанти тата Ростокинори тир комбиначӗсене, Вильнюсри Витас ячӗпе тӑракан тата Тысменица хулинчи тир фабрикисене реконструкцилемелле, Бельцы хулинче тир фабрикине туса пӗтермелле, Харьковри фабрикӑра ҫӗнӗ корпус туса ҫитермелле, Ростов облаҫӗнче сурӑх тирӗ тӑвакан ҫӗнӗ комбинат тумалла, Свердловскра тир ҫӗлекен фабрика лартмалла тата «Белка» фабрикӑра сурӑх тирӗнчен ӑтӑр тирӗ пек тир тӑвакан корпус туса ҫитермелле.

Пӗр-ик сӑмах пуҫа тӑхӑнмалли япаласем ҫинчен. Вӗсене туса кӑларасси юлашки ҫулсенче чылаях вӑйланчӗ. Ҫапах та эпир паха шлепкесем, уйрӑмах велюровӑйсем енӗпе халӑх ыйтнине тивӗҫтерейместпӗр, ҫулла тӑхӑнма улӑм шлепкесемпе кепкӑсен ассортименчӗ пысӑк мар, эпир хӗрарӑмсем валли те тӗрлӗ майпа илемлетсе фетртан, пурҫӑнран, бархатран тата тиртен тунӑ шлепкесем сахал кӑларатпӑр. Ҫак ҫитменлӗхе пӗтерсе пуҫа тӑхӑнмалли паха изделисем тӗлӗшпе рынок ыйтнине тивӗҫтермелле пулать.

Галантерея промышленноҫӗн ӗҫне пур майсемпе те лайӑхлатни кирлӗ. Ӑна пысӑк пӗлтерӗшлӗ промышленность тесе шутламалла. Вӑл кӑларакан продукцисен ассортиментӗнче ҫӗршер изделисем шутланассӗ, вӗсенчен кашнинех массӑллӑн илессӗ. Гардинӑсем, галстуксем, сумкӑсем, шнурсем, лентӑсем, перчаткӑсем, шӑтӑклӑ тӗрӗсем, чемодансем тата ытти ҫавӑн пек изделисем пурте халӑха питӗ кирлӗ япаласем пулса тӑрассӗ. ҫавӑнпа та эпир ҫав япаласене кирлӗ таран ҫеҫ мар, вӗсен ассортиментне нумайлатса пыма тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатса пама тивӗҫлӗ.

Кӗленче промышленноҫӗ ҫинчен те ҫавнах каламалла. Хамӑр ҫӗршывра халӑха массӑллӑн кирлӗ кӗленче изделийӗсен ытларах пайне пирӗн министерствӑна кӗрекен предприятисем туса кӑларассӗ. Кӑҫал вӗсем сортлӑ кӗленче савӑт-сапасем енӗпе ҫеҫ 300 миллион тенкӗлӗх продукци кӑларассӗ. 1950 ҫулхипе танлаштарсан вӑл 1,5 яхӑв хушӑнать. черкесем, графинсем, вазасем енӗпе 2 хут, сӑрласа илемлетнӗ кӗленче изделийӗсем енӗпе 2,5 хут ӳсет.

(Юлашки 3-мӗш страницӑра).

*) Кӗскетнӗ стенограмма тӑрӑх пичетлеет.

А. Н. КОСЫГИН юлташӑн доклачӗ

(Юлашки).

Ҫапах та кӗленчерен тунӑ нумай изделисем рынок ыйтнӑ чухлӗ туса кӑларайман-ха. Кӗленче промышленноҫӗ ҫӗнӗ йышши тӗрлӗ изделисем туса кӑларас тӗлӗшпе сахал ӗҫлет. Чылай заводсем, тӗслӗхрен, «Восстание», Артемовскри, Гусевски хрустальнӑй, Дятьковски заводсем чылай изделисене нӳр тӗрлӗ ҫеҫ туса кӑлараҫҫӗ. Ҫав заводсем тата ыттисем те кӑкшӑм, врехпе шыв валли савӑт-сапасем, черккесем, фужерсем тумалли плана тултармаҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах тума ҫӑмӑл изделисем енӗпе плана ытлашшипех тултараҫҫӗ.

Главстекло (Сентюрин, Петренко юлташсем) тата предприятисен руководителӗсен ассортимента тата изделисен пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе ытларах ӗҫлемелле, лайӑх каякан тата илемлӗ таварсене туса кӑларассине ӳстерес тӗлӗшпе пуҫарулла пулмалла, кӗленче предприятийӗсен ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмалла.

Материалсем тӑратакан министерствӑсем пире мӗн енчен тивӗҫтерейместӗҫ

Куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине хӑвӑрт вӑйлатмалли тата вӗсен пахалӑхне татӑклӑн лайӑхлатмалли условисенчен пӗри вӑл предприятисене кирлӗ чӗртавар, кучухнехи оборудовани, химикатсем, пӗветмелли сӑрӑсем, материалсем ҫителӗклӗ парса тӑни пулать. Апла пулин те хӑшпӗр министерствӑсем ҫав япаласене парса тӑмалли плансене, правительство ҫирӗплетнӗ плансене, ку таранччен тултармаҫҫӗ, ҫӗнӗ йышши машинӑсем, пӗветмелли сӑрӑсемпе химикатсем туса кӑларас ӗҫе вӑраххӑн йӗркелеҫҫӗ.

Ку уйрӑмах Хими промышленность министерствине тивет. Ку министерство юлашки ҫулсенче пӗветмелли сӑрӑсемпе химикатсен ассортиментне пысӑклатрӗ, вӗсен пахалӑхне лайӑхлатрӗ, анчах ҫӑмӑл промышленность ыйтӑвӗсене туллин тивӗҫтерейместь-ха: пӗветмелли сӑрӑсен ассортиментӗ пысӑк мар тата вӗсем ҫителӗклӗ ҫирӗп лармаҫҫӗ тата кирлӗ пек илемлӗ тӗслӗ мар. Тӗксӗм хӗрлӗ, сэмӗс, ҫутӑ кӑвак тата фиолетовӑй диазотировочнӑй тӳрех пӗветмелли сӑрӑсем ҫук, кубовой сӑрӑсем, уйрӑмах порошок евӗрлисем, ҫитмеҫҫӗ, ализариновӑй пӗветмелли сӑрӑсем сахал туса кӑлараҫҫӗ, тӗслӗ сернистӑй сӑрӑсем, нитроэмальсем, ҫавӑн пекех сӑрӑсене ҫирӗпрех ларма пулӑшакан, пир-авӑра ҫемҫетекен, штапельнӑй пир-авӑра ҫунӑ хыҫҫӑн сахал лармалла тӑвакан химилле материалсем, пир-авӑра шыв ямалла мар, кӗве ҫимелле мар тата ҫирӗпрех тӑвакан препаратсем сахал туса кӑлараҫҫӗ. 1954 ҫулхи пӗрремӗш квартальтан пуҫласа ҫӑмӑл промышленноҫа кирлӗ химикатсем, сӑрӑсем, препаратсем пирӗн заказсем тӑрӑх ҫителӗклӗ парса тӑма Хими промышленность министерстви татӑклӑ мерӑсем йышӑнтӑр тесе, тӑрӑшмалла пирӗн.

Ҫакӑн евӗрлӗ ҫитменлӗхсем Машиностроени министерствин те пур. Ку министерство тата унӑн предприятийӗсем пысӑкрах пахалӑхлӑ таварсем туса кӑларма май паракан ҫӗнӗ йышши машинӑсене питӗ вӑраххӑн туса хатӗрлеҫҫӗ, вӗсене туса кӑларас ӗҫ тытӑнса тӑрать. Пирӗн ку таранччен камвольнӑй ҫӑм пир-авӑр, платьесем ҫӗлемелли ҫӑмӑл бархатсем туса кӑлармалли, ковёрсем тӗртмелли оборудовани, ҫип туса кӑларакан машинӑсем туса кӑларассине ку таранччен йӗркелемен. Пикейнӑй, сатин тата байк утияльсем, махровӑй пир-авӑр тӗртмелли станоксем туса кӑларассине организацилемен. Промышленноҫӑн пир-авӑр тата трикотаж отраслӗсем валли продукцие пӗветсе хатӗрлемелли оборудовани туса кӑларас ӗҫ япӑх пырать. Штапельнӑй пир-авӑр туса кӑларнӑ ҫӗрте кирлӗ завеснӑй сушильнӑй машинӑсем, ҫутӑ сӑрӑсемпе пӗветмелли агрегатсем туса кӑлармаҫҫӗ. Пир-авӑра пӗр кӗртмесӗр хатӗрлесе ҫитермелли машинӑн тӗслӗхне туса хатӗрлесси икӗ ҫул ытла тӑсӑлать ӗнтӗ.

Машиностроени министерстви промышленноҫӑн питех те кирлӗ отраслӗсем валли — атӑ-пушмак, трикотаж, тир-сӑран промышленноҫӗ валли машинӑсем туса кӑларассине ку таранччен те сарса яман. Ҫӗвӗ промышленноҫӗ валли чылай специальнӑй машинӑсем, ҫавӑн пекех атӑ-пушмак путушне ҫӗлемелли лайӑхлатнӑ машинӑсем, коттоннӑй машинӑсем, тумтирсен тӳме йӑллисене тӑвакан тата ытти машинӑсем туса кӑларас ӗҫ япӑх пырать. Сӑран, тир, шӑртпа щетка, сӑран галантерея, ут таврашӗпе йӗнерсем туса кӑларакан промышленность валли технологилле оборудовани ҫителӗклӗ чухлӗ парса тӑраймаҫҫӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех Машиностроени министерстви ҫӑмӑл промышленность предприятийӗсене оборудовани, вӑл шутра специальнӑй машинӑсемпе агрегатсем тӑратмалли плансене хисеп енчен тата ассортимент енчен тултарса пымасть. 160 тӗслӗ машинӑсем тӑратмалла пулсан, 9 уйӑх хушшинче 51 тӗслӗ машина паман, 56 тӗслӗ машина тӑратмалли тӑхӑр уйӑхри плана тултарман. Машиностроени министерстви парса ҫитермен оборудование тӑратма тата 1954 ҫулта ҫӑмӑл промышленноҫа тӑратмалли оборудование туса кӑларма хатӗрленме тивӗҫлӗ.

СССР Ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев министерстви тата СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви пире тир-сӑран чӗртаварне тӑтӑшах ҫителӗксӗр параҫҫӗ. Тир-сӑран чӗртаварӗнчен чылай пайӗ, уйрӑмах пӗчӗк тирсем, питех те пӗчӗк пахалӑхлӑ пулаҫҫӗ.

СССР Вӑрман тата хут промышленность министерствине те ҫакӑн ҫинчен асӑрхаттармалла: питех те паха чӗртавар — вискознӑй целлюлоза тӑратассине лайӑхлатни, ӑна туса кӑларас ӗҫе ӳстерни тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатни кирлӗ, ҫапла вара искусственнӑй сӳс тӗлӗшӗнчен промышленность ыйтӑвӗсене пӗтӗмӗшпех тивӗҫтермелле. Ҫакӑнпа пӗрлех вӑрман тата хут промышленноҫӗ таварсене лайӑх чӗркеме кирлӗ пысӑк пахалӑхлӑ хутпа картон сорчӗсене туса кӑларассине татӑклӑн вӑйлатма тивӗҫлӗ.

СССР Министрӗсен Совечӗ 1953 ҫулхи октябрӗн 5-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленипе оборудованипе чӗртавар тӑратакан министерствӑсене ҫапла тума хушнӑ: куллен кирлӗ промышленность таварӗсем туса кӑларакан предприятисен ыйтӑвӗсене чи малтан тивӗҫтерсе пымалла, оборудовани чӗртавар тата ытти материалсем тӑратмалли плансене, ытти потребительсене тӑратмалли плансене тултарнине пӑхмасӑрах, обязательно пурнӑҫламалла. Пирӗн управленисен, пайсен тата предприятисен оборудовани, чӗртаварпа материалсем вӑхӑтра тата комплектлӑ илсе тӑрас тӗлӗшпе ҫав япаласене тӑратакансен умне пысӑкрах требованисем лартмалла.

Капитальнӑй строительство планӗсене кӑтартуллӑн тултармалла

Капитальнӑй строительство ӗҫӗнче пирӗн татӑклӑ улшӑну тумалла, ҫитес 2—3 ҫул хушшинче пысӑк предприятисене ӗҫлеттерме тытӑнмалла. Халӗ пирӗн министерство лимитран пысӑкрах объектсем 400 яхӑн тӑвать, вӗсен сметӑпа пӑхнӑ хакӗ 20 миллиард тенкӗрен иртет. Вӗсен тӗлӗшпе халлӗхе 9 миллиард тенкӗлӗх ӗҫе пурнӑҫланӑ. Кунсӑр пуҫне, лимитран пӗчӗкрех строительство енӗпе 800 ытла предприятие реконструкцилес тата пысӑклатас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн промышленноҫра капитальнӑй ӗҫсем тума хывакан укҫа-тенкӗпе усӑ курасси ҫителӗксӗр пырать. Ку вӑл ҫакӑнтан килет: строительство организацийӗсенчен нумайӑшӗнче рабочисемпе специалистсен кадрӗсем ҫителӗклӗ мар тата ҫав стройкӑсенче ҫынсен ӗҫне япӑх йӗркеленӗ. Нумай стройкӑсем техникӑлла документацие вӑхӑтра илеймеҫҫӗ, материалсене пур чухне те ҫителӗклӗ илсе тӑраймаҫҫӗ. Министерствӑн капитальнӑй строительство управленийӗ строительство планӗ мӗнле пурнӑҫланнине япӑх тӗрӗслесе тӑрать.

Эпир чи кӗске срокра строительство тӗлӗшпе юлса пынине пӗтерме, строительство ӗҫӗсен хӑвӑртлӑхӗпе унӑн пахалӑхне хӑвӑрт ӳстерме тивӗҫлӗ. Главновхлопром, Главшелкпром, Главшерсть, Главшелк, Главобувь уйӗнче производство хӑвачӗсене ӳстерес тӗлӗшпе — пысӑк заданисем пурнӑҫлас задача тӑрать. Анчах та ҫав главнӑй управленисем капитальнӑй строительство ӗҫне ку таранччен палӑрмалӑх лайӑхлатаймарӗҫ. Министерствӑн Главстройӗ халӗ те механизмсемпе япӑх усӑ курать, унӑн стройкисенче ҫавӑн пекех ӗҫ графикӗсене пӑсаҫҫӗ, ӗҫе кал-кал йӗркелени ҫук, япӑх пурнӑҫланӑ ӗҫе тепӗр хут тума тивет, ҫакӑ вӑл строительство хакне пысӑклатать.

Гипролегпром стройкӑсене техникӑлла документаци парса тӑмалли заданисене начар пурнӑҫлать. Ялан тенӗ пекех, стройкӑсем ҫав документацие вӑхӑтра илеймеҫҫӗ. Кӑҫал Гипролегпром чылай проектсене япӑх туса хатӗрленӗ.

Строительство министерстви те ӗҫе япӑх туса пырать. Вӑл Херсон, Энгельс, Камышин, Барнаул, Сталинабад хулисенче пысӑк пир-авӑр комбиначӗсем тӑвас ӗҫе ҫителӗксӗр пурнӑҫлать. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн 1954 ҫулта оборудовани вырнаҫтарма тытӑнма тата Камышин, Барнаул, Херсон хулисенчи комбинатсен пӗрремӗш черетне ӗҫе ямалла тӑвас пулать.

Правительство пирӗн промышленноҫа пысӑк пулӑшу парать. Пирӗн кӗске срокра строительствӑпа проект организацийӗсенчи пысӑк ҫитменлӗхсене пӗтермелле, вӗсене пуҫарулла тата ӗҫе пӗлекен работниксемпе ҫирӗплетмелле, стройкӑсенче материальнӑй ҫирӗп никӗс тумалла, рабочисен производствӑпа йӑлари условийӗсене лайӑхлатмалла, механизмсемпе тата автотранспортпа усӑ курассине чылай аванлатмалла.

Рабочисен йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессишӗн куллен тӑрӑшмалла

Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви ӗҫшыври ӗҫсыннисен материальнӑй пурнӑҫне вӗҫӗмсӗр лайӑхлатассишӗн тӑтӑшах тӑрӑшнине пула пир-авӑр промышленноҫӗнче ӗҫлекенсен, ҫавӑн пекех ҫӑмӑл промышленноҫри мӗнпур рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пурнӑҫпа йӑла тата ӗҫ условийӗсем лайӑхланаҫҫӗ.

Пурӑнмалли ҫуртсем туса лартма укҫа-тенкӗ уйӑрса парасси ҫултан-ҫул ӳсет. Тӑваттӑмӗш пилӗкҫуллӑхра пурӑнмалли ҫуртсем лартма пӗр миллиард тенкӗ яхӑн хывнӑ пулсан, ҫак пилӗкҫуллӑхӑн виҫӗ ҫулӗнче пурӑнмалли ҫуртсем тума 1,4 миллиард тенкӗ хывнӑ. Ҫав виҫӗ ҫул хушшинче ҫеҫ пирӗн промышленноҫри работниксем пӗр миллион тӑваткал метра яхӑн пурӑнмалли ҫуртсем илеҫҫӗ. Тӑваттӑмӗш пилӗк ҫуллӑхра пурӗ те 1,3 миллион тӑваткал метр пурӑнмалли ҫуртсем лартнӑ пулнӑ.

Анчах пурӑнмалли ҫуртсем тӑвас тӗлӗшпе нумай ҫитӗнӳсем тунӑ пулин те, ҫӑмӑл промышленноҫри хӑшпӗр предприятисенче пурӑнмалли ҫуртсем чылай ҫитмеҫҫӗ-ха. Уйрӑм главнӑй управленисемпе предприятисем пурӑнмалли ҫуртсем питӗ ҫителӗксӗр тата вӗсене вӑраххӑн тӑваҫҫӗ.

Пурӑнмалли ҫуртсем лартас ӗҫе сарас тӗлӗшпе правительство пирӗн умма пысӑк задачӑсем лартнӑ. 1954 ҫулта пурӑнмалли ҫуртсем лартма пӗр миллиард тенкӗ ытла, урӑхла каласан, пӗтӗм тӑваттӑмӗш пилӗкҫуллӑхринчен нумайрах укҫа уйӑрса пама палӑртнӑ. 1954 ҫулта пирӗн 685 пин тӑваткал метр чухлӗ, урӑхла каласан, кӑҫалхинчен 1,5 хут нумайрах пурӑнмалли ҫуртсем туса лартмалла.

Ҫавӑн чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем лартас тесен ҫак ӗҫре татӑклӑ улшӑнусем тумалла. Предприятисен, строительство организацийӗсен тата главнӑй управленисен руководителӗсен пурӑнмалли ҫуртсем лартас ӗҫе ертсе пырассине тӗпрен лайӑхлатмалла. Пурӑнмалли ҫуртсем лартма уйӑрса паракан укҫа-тенкӗпе туллин усӑ курман юрӑхсӑр практикӑна пӗтермелле. Пирӗн предприятисенчи партипе профсоюз организацийӗсен тата пӗтӗм общественноҫӑн пурӑнмалли ҫуртсем лартас ӗҫе куллен тимлӗн тӗрӗслесе тӑмалла тата пулӑшмалла.

Ҫӗнӗ ҫуртсем лартнипе пӗрлех пирӗн кивӗ пир-авӑр центрӗсене — Ивановӑна, Шуяна, Кинешмӑна, Орехово-Зуевӑна, Глуховӑна, Серпухова, Костромана, Ярославле тата ыттисене те юсаса лайӑхлатасси тата илемлетесси ҫине уйрӑмах тимлӗ пӑхмалла. Вӗсенче водопровод, канализаци ҫӗнӗрен тӑвас тата киввисен ӗҫне лайӑхлатас, ҫӗнӗ ҫулсем тӑвас тата киввисене юсас, рабочисем пурӑнакан поселоксенче йывӑҫсем лартас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттермелле.

Ҫӑмӑл промышленноҫӑн мӗнпур отраслӗсенче, уйрӑмах хӗрарӑмсем нумай ӗҫлекен пир-авӑр промышленноҫӗпе ҫӗвӗ промышленноҫӗнче, рабочисен ачисене ача учрежденийӗсенче пӑхса ӳстерессипысӑк вырӑн йышӑнать. Хальхи вӑхӑтра министерство системинче ача учрежденийӗсем 2 пине яхӑн пур. Ҫав учрежденисенче ҫӑмӑл промышленность предприятийӗсенче ӗҫлекен рабочисемпе служащисен ачисене — 140 пине яхӑн ачана пӑхса усраҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне ҫуллахи уйӑхсенче лагерьсенче тата ҫуллахи дачӑсенче 180 пин ытла ача канать. Ҫӑмӑл промышленноҫри рабочисен нумай ачисем ача сачӗсенче кунӗн-ҫӗрӗн пурӑнаҫҫӗ тата санатори йышши ача сачӗсенче воспитани илеҫҫӗ.

Куллен кирлӗ промышленность таварӗсен министерстви енӗпе ача учрежденийӗсем туса лартма 1953 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 9 хут нумайрах укҫа-тенкӗ уйӑрса панӑ. 1954 ҫулта пирӗн ача учрежденийӗсем тата ытларах лартас пулать. 1954 ҫулта ача учрежденийӗсем туса лартма, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, икӗ хута яхӑн нумайрах укҫа-тенкӗ уйӑрса параҫҫӗ. 1954 ҫулта пирӗн ача учрежденийӗсем 350 ытла тумалла, вӗсенчен ача сачӗсем 130 тата ача яслисем 85 туса пӗтерсе ӗҫе ямалла.

Анчах ҫакна палӑртас пулать: хальхи вӑхӑтра ача учрежденийӗсем туса лартас тата усас ӗҫсем питӗ вӑраххӑн пулса пыраҫҫӗ, ӳссе пыракан ыйтусенчен юлса пыраҫҫӗ. Маленков юлташ СССР Верховнӑй Совечӗн V-мӗш сессийӗнче пирӗн предприятисем ача учрежденийӗсем лартмалли плана япӑх тултарса пынине палӑртрӗ. Пурте пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ, пирӗн предприятисенче хӗрарӑмсем нумай ӗҫлеҫҫӗ, ҫавӑнпа ача сачӗсемпе ача яслисен пӗлтерӗшӗ уйрӑмах пысӑк. Пирӗн ача учрежденийӗсем туса лартас ӗҫ юлса пынине кӗске вӑхӑтра пӗтермелле, ача сачӗсемпе ача яслисем туса лартмалли плана тултармалла ҫеҫ мар, ирттерсе те тултармалла.

Революциччен ҫӑмӑл промышленноҫӑн, уйрӑмах пир-авӑр промышленноҫӗн кивӗ предприятийӗсенче ӗҫ условийӗсем ытла та йывӑр пулнӑ: унта вентиляци, ниепек пуласран сыхлакан техника, санитарипе йӑла хатӗрӗсем пулман. Совет влаҫӗ пулнӑранпа пир-авӑр промышленноҫӗнче, ҫавӑн пекех ҫӑмӑл промышленноҫӑн ытти предприятийӗсенче те рабочисен ӗҫ условийӗсем тӗпренех улшӑнчӗҫ. Ҫӗнӗ техникӑна вӗҫӗмсӗр пурнӑҫа кӗртсе пынӑ, технологи процесне ҫӗнетсе лайӑхлатнӑ, йывӑр тата нумай вӑй ыйтакан ӗҫсене механизациленӗ никӗс ҫинче ҫӑмӑл промышленноҫри рабочисен ӗҫӗ нумай ҫӑмӑлланнӑ.

Ӗҫ условийӗсене лайӑхлатма тӑваттӑмӗш пилӗкҫуллӑхра 400 миллион тенке яхӑн расходланӑ. Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхӑн виҫӗ ҫулӗнче ҫав ӗҫсене тума пӗтӗм тӑваттӑмӗш пилӗкҫуллӑхри чухлӗ укҫа-тенкӗ расходланать. Правительство ҫавӑн пекех чирлӗ ҫынсене сыватма, рабочисен сывлӑхне тӗреклетме тата профилактикӑлла ӗҫсем туса ирттерме те укҫа-тенкӗ нумай уйӑрса парать.

Ӗҫ условийӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе ҫӑмӑл промышленноҫӑн мӗнпур отраслӗсенче те пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ пулин те, пирӗн ку тӗлӗшпе тата нумай ӗҫлеме тивет. Уйрӑмах тир-сӑран промышленноҫӗнче ӗҫ условийӗсене ҫӑмӑллатмалла тата лайӑхлатмалла. Кунта механизаци шайӗ ҫӳлте тӑмасть, рабочисене нӳрлӗрех условийӗсенче ӗҫлеме тивет. Йӗтӗн тата кантӑр промышленноҫӗнче, ҫавӑн пекех пир-авӑр предприятийӗсенчи сывлӑш ытларах тусанлӑ цехсенче те ӗҫ условийӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттермелле пулать.

Ҫитес икӗ ҫул хушшинче пирӗн вӑй нумай ыйтакан тата хушма ӗҫсене, пуринчен малтан тир-сӑран завочӗсемпе пир-авӑр предприятийӗсенче пӗтӗмпех механизацилесе ҫитермелле. Кивӗ пир-авӑр предприятийӗсенче температурӑпа нӳрлӗхе автоматсемпе йӗркелекен, хальхи вӑхӑтра малта тӑракан вентиляци хатӗрӗсемпе хӗҫпӑшаллантарас ӗҫе туса ҫитермелле.

Мӗнпур ҫӗвӗ, трикотаж фабрикисен, тир-сӑран завочӗсен руководителӗсем вентиляци хатӗрӗсене ӗҫе сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен наукӑпа тӗпчев институчӗсем сӗннисемпе килӗштерсе вырнаҫтарса лартма тивӗҫлӗ. Ҫавӑн пекех пир-авӑр предприятийӗсен ҫип арлакан, пир тӗртекен тата шуратса сӑрлакан цехӗсенче, ҫӗвӗ, тир тата атӑ-пушмак фабрикисенче материалсем касса хатӗрлекен тата ҫӗлекен цехсенче, трикотаж предприятийӗсен нумай цехӗсенче хӑнӑхнӑ электричество ҫутине кӑнтӑрлахи пек ҫутатакан лампӑсемпе улӑштарассине хӑвӑртлатмалла.

Правительство кӑҫалхи октябрӗн 31-мӗшӗнче йышӑннӑ Постановленипе килӗштерсе, промышленноҫӑн тир-сӑран, атӑ-пушмак, тир, трикотаж тата ҫӗвӗ отраслӗсенчи рабочисен ӗҫ укҫине йӗркелес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттеретпӗр. Пир-авӑра, тумтире, атӑ-пушмака, трикотаж изделийӗсене тата ытти куллен кирлӗ таварсене сӑрласа илемлетес ӗҫе лайӑхлатас тата ҫав ӗҫре инженерсемпе техниксен рольне ӳстерес тесе Правительство пирӗн министерствӑна сӑрласа илемлетекен производствӑра ӗҫлекен специалистсене пӗрремӗш, иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш категориллӗ колорист, художник тата мастер ятне пама ирӗк панӑ. Тир, атӑ-пушмак промышленноҫӗнчи предприятисенче, трикотаж промышленноҫӗнчи ҫӗвӗ цехӗсенче — пӗрремӗш, иккӗмӗш тата виҫҫӗмӗш категориллӗ мастер ятне памалла. Асӑннӑ категориллӗ инженерсемпе техниксене, вӗсене тивӗҫлӗ ят панӑ хыҫҫӑн, ӗҫ укҫи хушса тӳлеҫҫӗ. Пӗрремӗш категориллӗ специалистсене — 40 процент, иккӗмӗш категориллӗ специалистсене — 25 процент, виҫҫӗмӗш категориллӗ специалистсене — 15 процент ӗҫ укҫи хушса тӳлемелле.

Ҫавӑнпа пӗрлех Правительство тир-сӑран, ҫӗвӗ, атӑ-пушмак, трикотаж, тир тата экстракт промышленноҫӗнчи рабочисен ӗҫ укҫине пӑхса тухса ӳстерме йышӑнчӗ. Асӑннӑ отраслӗсенче 1953 ҫулхи декабрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа, ӗҫ нормисене пӑхса тухнӑ вӑхӑтрах, ҫӗнӗ тариф сеткисемпе, ӗҫ укҫин ҫӗнӗ ставкисемпе, ҫӗнӗ тарифпа квалификациллӗ справочниксемпе усӑ курма тытӑнаҫҫӗ.

* * *

Куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас тӗлӗшпе татӑклӑ ҫӗкленӳ тӑвассишӗн кӗрешес ӗҫре пирӗн кадрсем тӗп вӑй пулса тӑраҫҫӗ. Юлашки ҫулсенче рабочисен, инженерсемпе техниксен составӗнче пысӑк улшӑнусем пулса иртрӗҫ. Пирӗн предприятисенче чылайранпа ӗнтӗ хутла пӗлмен ҫынсем ҫук. Рабочисенчен ҫурри 6—7-мӗш классенчен е вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ. 70 пин ытла ҫын производствӑра ӗҫленӗ вӑхӑтрах вӑтам тата аслӑ шкулсенче вӗренет. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче пирӗн промышленноҫра рабочисен хисепӗ икӗ хут ҫурӑ ӳсрӗ. Вӗсенчен ҫурри ытла ФЗО, ФЗУ шкулӗсемпе техникумсенчен вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксем.

Партипе правительство куллен кирлӗ таварсем туса кӑларакан промышленность умне лартнӑ пысӑк задачӑсем кадрсемпе ӗҫлессине малалла вӑйлатма, вӗсен квалификацине ӳстерме, кадрсем суйласа илес тата вӗсене вырнаҫтарас ӗҫе лайӑхлатма хушаҫҫӗ. 1954—1955 ҫулсенче пирӗн тӗрлӗ производствӑпа техникӑлла курссенче 500 пинтен кая мар рабочи вӗрентмелле. Аслӑ шкулсемпе техникумсем урлӑ инженерсемпе техниксем вӗрентсе хатӗрлессине чылай ӳстермелле. Кунсӑр пуҫне центральнӑй тата аслӑ курссенче 50 пин ытла инженерла-техникла работниксен квалификацине хӑпартас ӗҫе организацилемелле. Купавинӑри фабрика коллективӗн примерӗпе инженерсемпе техниксен вырӑнӗнче ӗҫлекен практиксене пурне те заочно тата касхи техникумсенче вӗрентессине йӗркелемелле.

Ҫӑмӑл промышленноҫра продукци туса кӑларассине ӳстерессишӗн, таварсен пахалӑхне лайӑхлатассишӗн, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетессишӗн социализмла ӑмӑрту анлӑ саралса пырать.

Пысӑк пахалӑхлӑ продукци туса кӑларассишӗн пыракан ӑмӑртӑва ҫакӑн пек йӗркелемелле: фабрика марки чысӗшӗн кашни работник, пирӗн предприятисен пӗтӗм коллективӗсем ответлӑха туйччӑр, предприяти коллективӗ плана сорт тӗлӗшӗнчен вӑтам цифрӑсем енӗпе ҫеҫ мар, пир-авӑрӑн кашни метрне, атӑ-пушмакӑн кашни мӑшӑрне, кашни костюма, ҫӑмӑл промышленноҫри ытти япаласене те паха туса кӑларассишӗн кӗрештӗр.

Промышленноҫри пур работниксен те ҫакна асра тытмалла: продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн, продукци ассортиментне нумайлатассишӗн кӗрешесси вӑхӑтлӑха пыракан ӗҫ мар, ӑна мӗнле те пулин уйрӑм тапхӑрта ҫеҫ ирттермелле мар. Ҫакӑ вӑл кашни предприяти, мӗнпур наукӑпа тӗпчев институчӗсем, Модельсен сурчӗсем, промышленноҫри мӗнпур рабочисем, инженерсемпе техниксем куллен, тимлӗ туса пымалли ӗҫ.

Производствӑра малта пыракан ҫынсен творчествӑлла активлӑхӗ ӳсет. Пирӗн чи лайӑх новаторсен — Чуткин, Ворошин, Корабельникова, Левченко, Амельченкова, Котова, Щукина, Ульянова юлташсен тата ытти нумай ҫынсен ячӗсене пӗтӗм ҫӗршывра пӗлеҫҫӗ. Малашне пирӗн малта пыракансемпе новаторсен хисепне ӳстерес тӗлӗшпе тата пикенсерех кӗрешмелле, вӗсен хаклӑ опытне мӗнпур рабочисем хушшине анлӑрах сармалла, юлса пыракан предприятисене малта пыраканнисен шайне ҫитермелле, пирӗн ӗҫри ҫитменлӗхсене татӑклӑн пӗтермелле.

Ҫакна йышӑнас пулать: пирӗн ҫитменлӗхсем сахал мар-ха. Нумай предприятисенче оборудованин пӗр пайӗпе туллин усӑ курмаҫҫӗ, чӗртаварпа материалсен тӑкакӗсем пысӑк, брак тата япӑх продукци туса кӑларнипе убытоксем нумай пулаҫҫӗ. Ҫавсем вӗсем пурте ӗҫ тухӑҫлӑхӗн кӑтартӑвӗсене чакараҫҫӗ, продукци пахалӑхне начарлатаҫҫӗ, продукцин хӑйне ларакан хакне ӳстереҫҫӗ, тупӑшсене чакараҫҫӗ. Асӑннӑ тата ытти ҫитменлӗхсене хирӗҫ татӑклӑн кӗрешмелле, мӗнпур предприятисем кӑтартуллӑ ӗҫлемелле, государство планне хисеп енӗпе те, пахалӑх кӑтартӑвӗсем енӗпе те ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласа пымалла тӑвас пулать.

Пирӗн промышленность юлашки ҫулсенче плана тултарса пычӗ, производствӑна чылай ӳстерчӗ. Ҫак ҫул вӗҫлениччен пирӗн ҫитес ҫулхи программӑна тултарма лайӑх хатӗрленмелле. Кам ҫапла тумасть, ҫав пысӑклатнӑ задание ҫӗнӗ ҫул пуҫламӑшӗнче пурнӑҫласа пыма пултараймасть. Пур отраслӗсенче те пирӗн декабрь уйӑхӗнче продукци туса кӑларас тӗлӗшпе хисеп енӗпе ҫеҫ мар, ассортимент енӗпе те 1954 ҫулхи пӗрремӗш квартал шайне ҫитермелле. Ҫӗнӗрен кадрсем вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе тимлӗ ӗҫлемелле.

Пирӗн ҫине ответлӑ та хисеплӗ задача хунӑ: ҫӗршыври халӑх валли куллен кирлӗ пысӑк пахалӑхлӑ, илемлӗ таварсем ҫителӗклӗ туса кӑлармалла. Ӑна пурнӑҫлама эпир пултаратпӑр, мӗншӗн тесен пир-авӑр промышленноҫӗнчи, ҫавӑн пекех пӗтӗм ҫӑмӑл промышленноҫри рабочисем социализм строительствин задачисене пурнӑҫлас ӗҫре ялан малти рабочи класӑн малти речӗсенче пулнӑ.

Пирӗн революцилле чаплӑ традициллӗ кивӗ пир-авӑр центрӗсем пур, унта опытлӑ ӑста рабочисемпе инженерла-техникла кадрсем нумай. Ивановӑри, Мускаври, Ленинградри текстильщиксем хӑйсен паха опытне Ҫӗпӗрте, Вӑтам Азире тата Кавказ леш енче ҫӗнӗрен тунӑ ҫӑмӑл промышленноҫӑн центрӗсене куҫарчӗҫ.

Пирӗн промышленноҫӑн атӑ-пушмак, тир-сӑран, ҫӗвӗ, трикотаж тӑвакан хӑватлӑ отраслӗсем, искусственнӑй сӳс тӑвакан промышленность пур.

Ҫапла вара пирӗн халӑх валли паха, илемлӗ пир-авӑр, тумтир, атӑ-пушмак тата ытти таварсем туса кӑларма пур майсем те ҫителӗклӗ. Иккӗленмелли ҫук, ҫӑмӑл промышленноҫӑн пур отраслӗсенче те ӗҫлекенсем партипе правительство куллен кирлӗ лайӑх пахалӑхлӑ таварсем туса кӑларас тӗлӗшпе татӑклӑ ҫӗкленӳ тума лартнӑ пысӑк задачӑна чыслӑн пурнӑҫлӗҫ.

Манӑҫа юлнӑ учреждени

Ку района тунӑранпа вунӑ ҫул ҫитесси инҫех мар ӗнтӗ. Ҫавах та Муркашри хӑшпӗр пуҫлӑхсем хӑйсен районне паян кунччченех ҫӗнӗ район вырӑнне шутлас йӑлана ниепле те пӑрахаймаҫҫӗ-ха.

Юлашки ҫулсенче кунта ҫурт хыҫҫӑн ҫурт лартаҫҫӗ. Райпотребсоюзӑн чайнӑйӗ ҫӗнӗ чаплӑ ҫуртра ӗҫлеме тытӑнчӗ. Вӑхӑт нумаях иртмӗ, Культура ҫурчӗ те халӗ куллен купаланса пыракан аслӑ чул ҫурта вырнаҫӗ. Икӗ уйӑх каярах район Совечӗ икӗ хутлӑ ҫӗнӗ пысӑк ҫурта куҫрӗ. Аслисем те, кӗҫӗннисем те хавасланса вырнаҫрӗҫ ҫӗнӗ ҫурта. Вуншар пӳлӗм шутланать унта. Анчах...

...Пӗр учреждени ҫеҫ пӗчӗк пӳлӗмре тертленет. Ку учреждени — КПСС Муркаш райкомӗпе ӗҫҫынни депутачӗсен район Совечӗн «Колхозник сасси» хаҫачӗн типографийӗ.

Ку 1952 ҫулхи ҫу кунӗсенчен пӗрринче пулнӑ. Полиграфи промышленноҫӗн республикӑри управленине вӗтмен ҫӗртен Муркашран салхуллӑ хут ҫитсе ӳкнӗ.

«Редакци ҫуртсӑр пурӑнать... — тенӗ унта. — Типографи ҫуртӗнче ӗҫлеме май ҫук — питӗ тӑвӑр, унӑн калӑпӑшӗ пӗтӗмпе те 44 кубометр ҫеҫ. Типографи кӑмакине тӗпрен юсамалла. Хут касмалли машина та питӗ кирлӗ».

Ку ҫыру ӗҫлӗ хутсен папкине ҫӗленнӗ те, тивӗҫлӗ ҫынсене урӑх кансӗрлемен. Управленишӗн сисӗнмесӗрех ҫултал ӑк иртнӗ. Анчах район хаҫачӗпе типографинче ӗҫлекенсемшӗн ку ҫулталӑк питӗ вӑрӑм пулнӑ. Саспаллисем пухмалли 4 касса, пичетлемелли машина, тискальнӑй станок, 2 сӗтел лартнӑ тӑвӑр та тӗттӗм пӳлӗмре 7—8 ҫын ӗҫлесе пурӑнать. Унтах ҫыраҫҫӗ, наборлаҫҫӗ, тӳрлетеҫҫӗ, касаҫҫӗ, пичетлеҫҫӗ, вулаҫҫӗ.

Килӗшесшӗн мар кунашкал йӗркепе «Колхозник сасси» хаҫатӑн редакцийӗпе типографинче ӗҫлекенсем. Ҫулталӑк ытларах иртсен, кӑҫалхи августӑн 18-мӗшӗнче, республикӑри Культура министерствин полиграфи промышленноҫӗпе издательствӑсен пайне вӗсем каллех ҫырса пӗлтереҫҫӗ: «Хальхи вӑхӑтра редакцин ҫурт пачах ҫук. Типографи ҫуртӗнче ӗҫлеме кансӗр...»

Вунӑ ҫула яхӑн вырӑнтан вырӑна куҫкаласа ҫӳренӗ хыҫҫӑн, редакци пӗр-икӗ кун каялла ҫеҫ аран-аран пӗр кӗтес тупса вырнаҫать.

Пӗлесчӗ: мӗнле ответ пама шутлаҫҫӗши ҫак ҫыру ҫине КПСС Муркаш райкомӗпе райисполкомӗ тата Культура министерстви — «ҫӗнӗ районра ҫурт тума хӗн» тесе мар пулӗ-ске?

Ст. ИВАНОВ.

Колхоза агроном килсен

Тимирязев ячӗпе тӑракан колхоз правленин пысӑк та ҫутӑ, нумай пӳлӗмлӗ ҫуртне вӑтам пӳллӗ, ҫине хура пустав пальто тӑхӑннӑ ҫын васкавлӑн пырса кӗчӗ. Вӑл пӳлӗмре ларакан колхозниксене пурне те ырӑ сывлӑх сунчӗ.

Ӑна хирӗҫ тепӗр пӳлӗмрен колхоз председателӗ Сергеев юлташ тухрӗ.

— Салам, Аникин юлташа, салам! — терӗ унӑн аллисене ҫирӗппӗн чӑмӑртаса председатель. — Парти чӗннипе колхоза килтӗр пулас. Аван. Эпир кӗтетпӗр сире...

Ҫавӑн хыҫҫӑн правленинче ларакан колхозниксем те ку ҫын агроном Аникин Александр Петрович пулнине туйса илчӗҫ.

* * *

Агроном колхоза килнӗренпе пӗр уйӑх ытла ӗнтӗ. Колхозра ӑна ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илчӗҫ. Лайӑх хваттер тупса пачӗҫ, колхозӑн хирӗсене тухса ҫӳреме лаша уйӑрчӗҫ. Чи малтан агроном колхозӑн пӗтӗм хуҫалӑхне пӑхса ҫӳрерӗ, унӑн анлӑ хирӗсемпе, фермисемпе тата ҫыннисемпе паллашрӗ. Колхозӑн нумай енлӗ хуҫалӑхӗпе паллашнӑ хыҫҫӑн, агроном ҫакна палӑртрӗ: колхоз хуҫалӑхне тата унӑн экономикине тӗреклетме пысӑк майсем пур. Анчах ҫак майсемпе туллин усӑ курмаҫҫӗ. Фермӑсенче тислӗк тулса кайнӑ, апла пулин те ҫӗртме уйне тислӗк кӑларман.

Тимирязев ячӗпе тӑракан колхозӑн акмалли ҫӗр лаптӑкӗ 1.790 гектар шутланать. Кунсӑр пуҫне 100 гектара яхӑн ҫаран шутланать. 20 гектар ҫинче сад пур.

Малта пыракансен опычӗсемпе туллин усӑ курмалла. Колхоз председателӗпе агроном, районти малта пыракан колхозсен опычӗсемпе паллашас тесе, Буденный ячӗпе тата Маленков ячӗпе тӑракан колхозсенче пулчӗҫ. Вӗсен ӗҫӗнчи опытсемпе паллашрӗҫ, ӗҫе тӗрӗс йӗркелесе ярас енӗпе паха канашсем илсе таврӑнчӗҫ.

Ыраш, тулӑ, сӗлӗ, пӑрҫа, вир колхоз акакан тӗп культурӑсем пулса тӑраҫҫӗ. Колхозӑн тырпул тухӑҫлӑхӗ пӗчӗк. Вӑл вӑтам шутпа кашни гектартан 8—9 центнер тӗштырӑ туса илет. Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илме ҫӗре кирлӗ таран тислӗк, минераллӑ удобренисем памалла, агротехника кӑтартӑвӗсене вӑхӑтра пурнӑҫласа пымалла.

Ӗҫре пысӑк опыт илнӗ, нумай вӗреннӗ агроном колхозра ӗҫе ҫӗнӗлле йӗркелес тесе кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлет.

Агроном малта пыракан колхозсен тӗслӗхӗсем тӑрӑх епле ӗҫлемеллине йӗркипе каласа панӑ. Вӗсем мӗнле майпа пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илнине каланӑ, ӑнлантарнӑ.

Халӗ колхозра обществӑлла хуҫалӑха малалла хӑватлӑн аталантарма 1954—1955 ҫулсем валли ҫӗнӗ план тӑваҫҫӗ.

Курӑксем акса тумалли пусӑ ҫаврӑнӑшне ҫирӗп йӗркене кӗртмелле. Ҫакӑ пӗтӗм ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне хӑпартма пулӑшать, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх валли ҫителӗклӗ апат хатӗрлеме май парать. Кашни гектар ҫӗр лаптӑкӗ ҫине 35 тонна тислӗк, 3 центнер минераллӑ удобренисем тӑкма палӑртнӑ. Тислӗк турттарма 4 грузовой автомашинӑпа усӑ курмалла, чӗрӗ туртӑм вӑйӗпе те усӑ курмалла.

Ҫарӑйсем ҫинче утӑ начар пулать. Ҫавӑнпа ҫарансене МТС пулӑшнипе ҫӗнетме палӑртнӑ.

Колхозӑн усӑсӑр выртакан кӳлӗсемпе пӗвесем пур. Кӳлӗсене, ҫӗнӗ пӗвесене ҫуркунне карас, карп пулӑсем ярса, пулӑ ӗрчетмелле.

Ҫавӑн пекех колхоз правленийӗ, активпа пӗрле сӳтсе явса, сад, пахча ҫимӗҫ культурисем лартса тумалли ҫӗр лаптӑкне 10 гектара ҫити ӳстерме палӑртнӑ. Вара сад-пахча йышӑнакан ҫӗр лаптӑкӗ колхозра 30 гектара ҫитет. Ҫапла туни колхоз тупӑшне ӳстерме май парать, ӗҫкунӗ те пуянрах пулать.

Колхоз агрономне ҫак хӗрӳллӗ кунсенче пур ҫӗрте те курма пулать: хирте, строительство площадкисенче, фермӑсенче, итемсем ҫинче. Пур ӗҫе те вӑл ҫитсе курать, тӗрӗслет. Ӗҫе епле майпа тусан аван пулассине каласа ӑнлантарать, паха кӑтартусем парать, ӗҫри лайӑх опыта сарма тӑрӑшать.

Колхоза районти культура пайӗ ҫӗнӗ фильм ярса панӑ. Унта пахча ҫимӗҫпе ҫӗрулмине ҫӗнӗ майпа лартса тунине ӳкернӗ. Ҫак фильма колхозри кашни бригадӑрах кӑтартнӑ. Кино пуҫланиччен Аникин юлташ ҫӗрулми, пахча ҫимӗҫсем тӑваткал йӑвӑпа лартса пысӑк тупӑш илесси ҫинчен лекци вуласа панӑ. Пур ӗҫе те ҫӗнӗлле туса пымалла, пурин те вӗренмелле.

Ноябрӗн 1-мӗшӗнче 3 ҫул вӗренмелли агрозоотехника курсӗнче занятисем пуҫланчӗҫ. Унта 40 ҫын ытла вӗренет. Занятисене агроном Аникин юлташ ирттерет.

Колхоз ӗҫченӗсен ӗҫри хастарлӑхӗ нихҫанхинчен те пысӑк. КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ ялхуҫалӑхӗ умне кӑларса тӑратнӑ пысӑк задачӑсене пурнӑҫлассишӗн вӗсем ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ.

— Пирӗн колхоз та малта пыракан колхоз пулать. Ҫакна эпир тӑватпӑрах, — теҫҫӗ колхозниксем.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

Тимирязев ячӗпе тӑракан колхоз, Етӗрне районӗ.

ҪӖНӖ ХВАТТЕРСЕНЕ КУҪАҪҪӖ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри рабочисене валли ҫак кунсенче 18 хваттерлӗ ҫурт, 8 хваттерлӗ виҫӗ ҫурт туса пӗтерчӗҫ. Хваттерсем нурте виҫ-тӑват пӳлӗмлӗ. Ҫуртсене пӑспа ӑшӑтаҫҫӗ.

Хусан чугун ҫулӗн 5-мӗш дистанцийӗ те путеецсем валли сакӑр хваттерлӗ тепӗр ҫурт туса пӗтерчӗ.

Г. ИСАЕВ.

Польшăра тавар хакĕсене йӳнетнĕ

ВАРШАВА, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕçсыннисен пурнăçне малалла лайăхлатса пырас тĕллевпе тата вĕсем тавар ытларах илме пултарччăр тесе, Польша Халăх Республикин Министрсен Совечĕ 1953 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа хăшпĕр апат-çимĕç тата промышленность таварĕсен хакĕсене, çавăн пекех хăшпĕр ĕçсемшĕн тӳлемелли хаксене йӳнетесси çинчен постановлени йышăннă.

Постановлени тăрăх, çăкăр тата çăкăрпа булка изделийĕсен хакĕсем вăтам шутпа 7—12 процент, сухари хакĕ—40 процент, кондитер таварĕсен хакĕ—10 процент, сахăр хакĕ—13,5 процент йӳнелнĕ.

Çавăн пекех куллен кирлĕ промышленность таварĕсен хакĕсем те йӳнелессĕ.

Ресторансенчи, столовăйсенчи тата общественлă апатланăвăн ытти предприятийĕсенчи хаксене те постановленипе кăтартнă хаксемпе тан йӳнетессĕ.

Кăçал хаксене йӳнетнине пула, тенĕ постановленире, ĕçсыннисем çулталăк хушшинче 4.500 миллион злотыйлăх тупăш курассĕ, сезонлăх хаксем йӳнелнипе пĕрле илес пулсан, вĕсем çулталăкра 5.400 миллион злотыйлăх усă курассĕ.

АЛБАНИРЕ КĔРАКИ ПЫРАТЬ

ТИРАНА, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Албанире кĕраки ăнăçлă иртет. Кăçал акмалли çĕр лаптăкĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 12,5 процент ӳснĕ. Хресченсене машина-трактор станцийĕсем пысăк пулăшу парассĕ. Машина-трактор станцийĕсене çĕнĕ машинăсемпе хĕçпăшаллантарнă. Государство хресченсене выльăх-чĕрлĕх, вăрлăх, минераллă удобренисемпе ялхуçалăх машинисем туянма кивçен 42 миллион лек ытла укçа панă.

Демократиллĕ Вьетнам Республикин Министрсен Советĕнче

ШАНХАЙ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнамри информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Демократиллĕ Вьетнам Республикин Министрсен Совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Хо Ши Мин президент председатель пулса ертсе пынă.

Юлашки уйăхсем хушшинчи шалти тата тулашри лару-тăрăва пăхса тухнă хыççăн, ларура пулнисем Вьетнам Халăх çарĕн командующийĕ Во Нгуен Зиап генерал фронтри лару-тăру çинчен тунă отчета итленĕ.

Хăйĕн отчетĕнче Во Нгуен Зиап генерал çакна кăтартса панă: иртнĕ çулхи кĕркуннепе хĕллехи кампанире çĕршывăн çурçĕр-хĕвеланăçĕнче тунă çĕнтерӳсем хыççăн тата тăшмана 1953 çулхи çуркунне Патет-Лаон çурçĕр пайĕнче çапса аркатнă хыççăн тăшман тылĕнче партизансен кĕрешĕвĕ палăрмаллах вăйланнă.

Генерал малалла çапла каланă: тăшман Хĕрлĕ юханшывĕн дельтинче (Вьетнамăн çурçĕр пайĕ) халăх çарне хирĕç темиçе пысăк операци туса пăхнă, анчах Халăх çарĕ тăшмана хирĕç пырса çапнă, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене нумай пĕтернĕ. Тăшманăн çак операцийĕ тĕппипех путланса ларнипе вĕçленнĕ.

Министрсен Совечĕ малалла «ялсенчи халăхăн административлă комитечĕсене тĕреклетмелли программăна» йышăннă.

Кунсăр пуçне, Министрсен Совечĕ ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан законри хăшпĕр пунктсене тӳрлетнĕ; тăшман тылĕнче тата туллă-сăртлă районсенче пурăнакан халăхран илекен налога чакарнă.

Совет кĕнекисене пичетлесе кăлараççĕ

ШАНХАЙ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнамри информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Демократиллĕ Вьетнам Республикинче, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, совет кĕнекисене вьетнам чĕлхипе нумай пичетлесе кăлараççĕ. Государство издательстви В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн кĕнекисенчен нумайăшне пичетлесе кăларнă. Çавăн пекех Мичурин, Лысенко тата ытти совет ученăйĕсен научнăй ĕçĕсене вьетнам чĕлхи çине куçарнă. Ĕççыннисем Совет Союзĕнчи пурнăç çинчен каласа паракан брошюрăсене нумай туянаççĕ.

АНГЛИРИ ХАÇАТСЕМ СОВЕТ АРТИСЧĔСЕН ĂСТАЛĂХĔ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» тата «Дейли уоркер» хаçатсем совет артисчĕсен пысăк ăсталăхне палăртаççĕ. Артистсем хăйсен пултарулăхне ноябрĕн 14-мĕшĕнче Лондонри Роял фестивальхолра кăтартнă. «Дейли уоркер» хаçат балет артисчĕсене Шелеста, Шатилова, Фарманянца пысăка хурса хаклать. Хаçат Фарманянца вăл Асафьевăн «Пламя Парижа» балетĕнче вылянишĕн уйрăмах мухтаса çырать.

«Таймс» хаçат çакна кăтартса парать: Измайлова пысăк ăсталăхпа ташлать. Белла Давидович пианистка, тесе çырать «Таймс» хаçат, музыка техникине питĕ лайăх пĕлет, пысăк ăсталăхпа вылять.

«Дейли уоркер» çапла çырать: Пятницкий ячĕпе тăракан хорти виçĕ солист питех те хавхаланса, куракансене савăнтармалла ташларĕç. Ку ташă вăл «совет çамрăкĕсен савăнăçĕпе телейне кăтартса пани пулчĕ», тесе паллă тăвать хаçат.

ДЖОНСТОН ĔÇĔ ПУТЛАНСА ЛАРНИ ÇИНЧЕН

БАИР, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Роза эль-Юсеф» журнал çапла пĕлтерет: США президенчĕ Эйзенхауэр ятарласа панă задани тăрăх нумаях пулмасть Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене кайса килнĕ Эрик Джонстон хăйĕн ĕçĕ путланса ларнине уççăнах йышăннă.

Маларах çапла пĕлтернĕччĕ: Джонстон араб çĕршывĕсене Америкăн «экономикăлла пулăшăвĕн» проектне йышăнтарма хăтланнă. Ку проектăн тĕллевĕ çав çĕршывсене США-на пăхăнса тăмалла тăвасси пулнă. Америкăн сĕмсĕр çĕнĕвĕсене сирсе янă, кăтартса парать журнал.

Уругвайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ

МОНТЕВИДЕО, ноябрĕн 16-мĕшĕ, (ТАСС). Уругвайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ пысăк ăнăçлăхпа иртет. Уйăхлăха Уругвайпа Совет Союзĕ хушшинчи культурăллă çыхăнăвăн институчĕ организациленĕ.

Институт çуртĕнче фотовыставка уçăлнă. Вăл Совет Союзĕ промышленность, ялхуçалăхĕ, культура енĕпе тунă çитĕнӳсене, çавăн пекех совет халăхĕн пурнăçĕ лайăхланса пынине кăтартса парать.

Выставкăна уçнă чухне нумаях пулмасть Совет Союзĕнчен таврăннă Освалдо Лусардо совет медицинин çитĕнĕвĕсем çинчен доклад туса панă.

Совет Союзĕ, тенĕ Лусардо, телейлĕ пурнăç тăвать. Çак ĕçе тума ăна мир кирлĕ. Совет Союзĕнче пулнă çынсенчен никам та çакăн пирки иккĕленме пултараймасть: Совет Союзĕ чăннипех миршĕн тăрать, миршĕн активлă кĕрешет.

Доклад хыççăн совет кинофильмĕсене кăтартнă.

Мосаддыка суд туни

ПАРИЖ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Тегеранран пĕлтернĕ тăрăх, Мосаддык доктор ĕçне пăхса тухакан суд Мосаддыкпа Рияхи генерал ĕçне пăхса тухма хăйĕн право пурри çинчен йышăннă. Паян суд ларăвĕнче генеральнăй çар прокурорĕ Азмуде генерал Мосаддыкпа Рияхие айăпласа сăмах тухса каланă.

Хĕвеланăç Германире вăрçа хатĕрленеççĕ

БЕРЛИН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Бонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: США тата Англи Хĕвеланăç Германире çар советникĕсем тата сыхăну ушкăнĕсен советникĕсене уйăрса лартма хатĕрленеççĕ. Вĕсем «Хĕвеланăç Германин пулас çарне пулăшас енĕпе» ĕçлемелле.

Англи, США, кăтартса парать корреспондент, Бонра çарпа авиаци атташисене, çар советникĕсен ушкăнĕсене тытса тăма шутлаççĕ.

Малалла корреспондент çакна паллă тăвать: США тата Англи «Хĕвеланăç Германири çĕнĕрен йĕркелекен хĕçпăшаллă вăйсене вĕрентес тата çар снаряженийĕ тĕлĕшпе пулăшу парасси çинчен калаçса татăлнă».

Корреспондент пĕлтернинчен çакă курăнать: Бланк ведомствинче,—вăл, тĕрĕссипе илсен, Хĕвеланăç Германири çар министерстви пулса тăрать,—гитлерла вермахтăн çыннисем пулнă çар специалисчĕсем ĕçлеççĕ. Корреспондент çапла çырать: «Çак специалистсене Адольф Хойзингер генерал—гитлерла генеральнăй штабăн оперативлă пайĕн начальникĕ пулнăскер тата Ганс Шпейдель генерал — Роммель фельдмаршал штабĕн начальникĕ пулнăскер ертсе пыраççĕ. Гитлерла çарăн полковникĕсемпе майорĕсем пулнă çынсенчен тăракан çак штаб пулăшнипе, вĕсем Хĕвеланăç Германин çĕнĕ çарне организацилес плана хатĕрлесе çитернĕ. Политика деятелĕсем сигнал парсанах, çак план пурнăçланма пултарать...

Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем Хĕвеланăç Германин çарĕсене Германири полигонсемпе усă курма ирĕк пама килĕшеççĕ. Хĕвеланăç Германири летчиксен Америкăпа Англи базисенче вĕренмелле пулать».

Франци халăхĕ Бонра тата Парижра тунă договорсене çирĕплетессине хирĕç тăрать

ПАРИЖ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Францири чи пысăк тăхăр хулара халăх пухăвĕсемпе демонстрацисем пулса иртнĕ. Унта çĕршыври 20 департаментăн представителĕсем хутшăннă. Вĕсем Хĕвеланăç Германие хĕçпăшаллантарнине хирĕç протестленĕ.

Страсбургра Эльзаспа Лотарингири ĕçсыннисен делегачĕсем пухăннă. Ĕççыннисем демонстрацире «Çĕнĕ вермахт пулмĕ!», «Нацистсем тĕп пулччăр!», «Бонра тата Парижра тунă договорсем тĕп пулччăр!» тесе çырнă лозунгсем йăтса пынă. Демонстраци хыççăн хулари ĕç биржинче пысăк митинг пулса иртнĕ.

Митингра Эжени Коттон госпожа сăмах тухса каланă. Вăл çапла пĕлтернĕ: «Европа çарĕ» текенскер «Европа çарĕ те мар, оборона çарĕ те мар, мĕншĕн тесен Совет Союзĕ никама та хăратса тămасть». Вăл çакна кăтартса панă: французсен Бонра тата Парижра тунă договорсене çирĕплетме чармалла, мĕншĕн тесен Германие хĕçпăшаллантарни вăрçă патне илсе пырать.

Прогрессивлă республиканецсен союзĕн членĕ Пети генерал Францин тулашри политики Франципе Совет Союзĕ хушшинче туслă пурăнасси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договора тĕрĕс те пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырасси çинче никĕсленсе тămалла тесе тухса каланине митингра пулнисем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Блуа хулинче ултă пин делегатăн — темиçе департаментра пурăнакансен пухăвĕ пулнă. Пухăва Франции паттăр патриочĕ Анри Мартэн председатель пулса ертсе пынă. Коммунистсен партийĕн вырăнти организацийĕсен, социалистсен партийĕн, католикла тата автономиллĕ профсоюзсен представителĕсем Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантарас ĕçе чарса лартма чĕнсе каланă.

Англири тата Францири хаçатсем тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас ыйту çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 13-мĕшĕнчи пресс-конференцире В. М. Молотов Совет Союзĕн позицийĕ çинчен çирĕппĕн те уççăн каласа панă пирки хăшпĕр буржуалла хаçатсем вăхăтлăха ним çырма аптраççĕ. Вăл хаçатсем Совет Союзĕ ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă нотăна питĕ пăсса кăтартнă, çавна май вулакансем нумайăшĕ унта çырнине çакăн пек ăнланма пултарнă: Германи ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе канашлу пухасси çинчен панă сĕнӳсене Совет Правительстви сирсе янă имĕш. Çакăн пек позици йышăнса, буржуалла хаçатсем, паллах ĕнтĕ, Англипе США-н тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма килĕшмен ушкăнĕсем хыççăн кăна пынă. В. М. Молотов патĕнче пулнă пресс-конференци Англири тата ытти çĕршывсенчи миллионшар çынсене пăтраштарма хăтланнине хыттăн пырса çапнă. Вăл çынсем тĕнчери йывăрлăхсене татса пама кирлĕ майсем тупма тăрăшаççĕ.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатăн дипломатиллĕ обозревателĕ çапла пĕлтерет: Молотов, Совет Союзĕ Хĕвеланăçĕпе калаçусем иртерессшĕн мар тенине сирсе ярса, «Россия тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатмалли ыйтусене пăхса тухас тĕлĕшпе пилĕк державăн канашлăвне пухассишĕн малашне те çине тăнине уççăн кăтартса пачĕ... Вăл канашлăва коммунистла Китай та хутшăнмалла. Молотов шухăшĕ çакна систерме тĕлев лартнă пулмалла: малтан атомлă хĕçпăшала пĕтересси тата чарса лартасси çинчен килĕшӳ йышăнмасан, Германие пĕрлештерес ыйту тăрăх килĕшӳ тума хăтланнине Россия тĕлсĕр тесе шутлĕ».

ПАРИЖ, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Фигаро» хаçат заголовокра çакна кăтартса парать: «Молотов... тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва коммунистла Китая хутшăнтарса сӳтсе явма кирли çинчен каллех çине тăрать».

Парижри «Комба» хаçат çакна кăтартса парать: «Молотов ноябрĕн 3-мĕшĕнчи нотăн содержанийĕпе тепĕр хут паллаштарас тесе кăна мар тухса каланă. Питех те паллă: вăл пресс-конференцире тухса каланинче... Германие хĕçпăшаллантарнине хирĕç çĕнĕрен асăрхаттарни пур...»

«СССР,—тесе çырать «Паризьен либере» хаçат.—Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕ хушшинчи мĕнпур тавлашуллă ыйтусене сӳтсе явма сĕнет... Паллах, тахçанах çакă паллă: пирĕн патăрта тата пирĕн союзниксем патĕнче ырă шухăш-кăмăллă çынсем çакăн пек калаçусем иртермелли йĕркене кăмăллаççĕ, «йывăр лару-тăрăвăн сăлтавĕсен» шутне хĕçпăшалсăрланас тата атомлă хĕçпăшала контроллесе тăрас ыйтусене кĕртнине ырламалла çеç».

В. М. Молотов тухса каланине Францири общественность кăмăлласа йышăнĕ, тесе шутлать юлашкинчен хаçат.

«СОВЕТ СОЮЗĔ ТĔНЧЕРИ ЙЫВĂР ЛАРУ-ТĂРĂВА ÇĂМĂЛЛАТАССИШĔН ЫВĂНМА ПĔЛМЕСĔР КĔРЕШЕТ»

ПРАГА, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Руде право» хаçат паян «Совет Союзĕ тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешет» ятлă статья пичетлесе кăларнă.

Статьяра çапла каланă: империализмла державăсенчи влаçра тăракан тата вĕсен аллинче тăракан пичет суйса Совет Союзĕн нотин пĕлтерĕшне чакарма е Совет Союзĕ панă сĕнӳсен тĕп шухăшне пытарма хăтланнă пулнă. В. М. Молотов пĕлтерни çав суяна сирсе пăрахрĕ.

Совет нотипе В. М. Молотов каланине пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем кăмăлласа кĕтсе илчĕç. Ку вăл Совет Союзĕн çĕнĕвĕсем мире юратакан этемлĕхĕн шухăш-ĕмĕчĕсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăнине çирĕплетсе парать.

АВСТРИРЕ ХАКСЕМ ӲСЕÇÇĔ

ВЕНА, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Эстеррейхише фольксштимме» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки тăватă уйăх хушшинче Австрире аш-какай хакĕ 45 процент ӳснĕ.

РСФСР-ти художествăлла выставка умĕн

Мускавра декабрĕн 1-мĕшĕнче Россия Федерацийĕнчи художествăлла выставки уçăлать. Пирĕн республикăри художниксем выставкăна хăйсен произведенийĕсене тăратма хатĕрленеççĕ.

Çак кунсенче республикăри выставка комитечĕ чăваш художникĕсен произведенийĕсене пăхса тухрĕ. Выставкăна тăратма чи лайăх картинăсемпе этюдсем суйласа илнĕ. Вĕсен шутĕнче—Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн М. Спиридоновăн Атăл леш енчи илемлĕхе кăтартакан пейзаж, Е. Ноздринăн «Агитатор Макаров» тата «Пионер-барабанщик», Р. Ермолаева ӳкернĕ «Дошкольник» тата «Студентка в саду», С. Скрябинăн «Дорога в Чувашии», И. Кудрявцев скульптор тунă Социализмла Ĕç Геройĕ Н. Суров бюсчĕ тата ытти художниксен картинисем.

Выставкăна тăратма произведенисем суйласа илес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет çакна палăртрĕ: хăшпĕр картинăсем идейăпа художествăлла ăсталăх енчен начар, ялхуçалăхĕпе промышленность ыйтăвĕсем тăрăх ӳкернĕ картинăсем çук. Комитет асăрхаттарăвĕсене художниксем шута илчĕç, малашне хăйсен произведенийĕсенче республика пурнăçне анлăрах сутатма пулчĕç.

П. СИЗОВ,
художник.

Кĕскен

★ **Обязательствăсене пурнăçланă.** Элĕк районĕнчи Шверник ячĕпе тăракан колхоз государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата çăм памалли обязательствăсене пурнăçланă.

С. ТИХОНОВ.

★ **Çурт-йĕр тăваççĕ.** «Путь Ленина» колхозра (Красноармейски районĕ) общественлă çурт-йĕр чылай тăваççĕ. Кăçал кунта 300 чăх-чĕп вырнаçмалăх вите туса лартнă.

Ю. СОСНИН.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ килнĕ «Пятницын халаласа парнелет» ятлă çырура Хĕрлĕ Чутай райлесзаг директорĕ Ф. В. Пятницын Гришаткинăна хăй хуçалăхĕнче тара тытса ĕçлеттерни, анчах ĕçленĕшĕн укса тӳлемени çинчен çырнăччĕ. Çавăн пекех çырура Гришаткинăна пĕр вăхăтрах конюхра ĕçлеттерсе тивĕçлипе тӳлеменнине те кăтартса панăччĕ.

КПСС Хĕрлĕ Чутай райкомĕ асăннă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Парти райкомĕн бюровĕ, октябрĕн 23-мĕшĕнче парти членĕ Ф. В. Пятницын çинчен ятарласа сӳтсе явса, çынна тара тытса ĕçлеттернĕшĕн ăна хытă ятланă тата Гришаткинăна пăхса усрама хăй патне илме хушнă.

* * *

Буславкка районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз правленийĕн сентябрĕн 17-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче штатра тăракан колхозниксене (вĕсем çĕрулми кăларма тухмаççĕ пулсан та) уйра кăларакан çĕрулмирен пĕр пайне уйăрса пама решени йышăннă. Çакна май кунта хăшпĕр çынсем, çав шутрах пуçламăш шкул заведующийĕ тата правлени членĕ Я. Н. Осипов та, çĕрулми чылай илнĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсни çинчен çырнă çак çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Буславкка райисполкомне янăччĕ. Райисполком çырура асăннисем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни, колхоз правленийĕ сентябрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă решение (ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса йышăннăскерне) пăрахăçа кăларма йышăнни, шкул заведующийĕ Осипов законсăр йĕркепе илнĕ 244 килограмм çĕрулмие колхоза каялла тавăрса пани çинчен пĕлтерчĕ.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Советски районĕнчи «Правда» колхозри комсомол пуçламăш организацийĕ япăх ĕçлени çинчен çырнă çырăва КПСС Советски райкомне тĕрĕслеме янăччĕ.

Парти райкомĕ çырура кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. «Правда» колхозри комсомол организацийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме кирлĕ мерăсем йышăннă.

Пĕлтерни

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче политикăлла экономие вĕренекенсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Таварлă производство. Тавар тата укса».

Лектор—П. Л. Лебедев юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—ноябрĕн 18-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Айдар». Ноябрĕн 19-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Мачеха».

Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 18-мĕшĕпе 19-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм-спектакль «Враги».

16 сехет те 15 минутра тата 20 сехет те 15 минутра пуçланакан сеанссенче—пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехет те 15 минутра пуçланакан сеанссенче—иккĕмĕш сери.

Критикăпа библиографи

Тĕллев патне çитеймен

Чăвашгосиздат Н. Евстафьев ачасем валли çырнă «Пирĕн Шупашкар» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Кунта эпир çав кĕнеке çинчен хамăр шухăшсене каласа парасшăн.

Кĕнекен тĕллевĕ—хамăр республика столици илемĕпе çитĕнĕвĕсем урлă Тăван çĕршыва, тăван хулана юратма вĕрентесси.

Шупашкар—Чăваш АССР столици, пирĕн куç умĕнче ӳссе çĕнелекен промышленноçпа культура центрĕ. Халĕ тăвакан пир-авăр комбиначĕ пĕтĕм Совет Союзĕпе пысăк пĕлтерĕшлĕ предприяти пулать. Çĕнĕрен тăвакан пысăк та çӳлĕ çуртсем тăван хулана илем кӳреççĕ. Аслă Атăл тăрăх Шупашкартан пилĕк тинĕсе тухма, çугун çул тăрăх Тăван çĕршывăн хулисене кайма çул уçă. Коммунистсен аслă партийĕ куллен тăрăшнипе, çĕршыври мĕнпур хуласем пекех, пирĕн Шупашкар та хăватлăн ӳссе чечекленет, пилĕкмĕш пилĕкçуллăхăн аслă задачисене пурнăçлас ĕçре иксĕлми вăйпа тăрăшать.

Тăван хула çинчен çырнă кĕнекене кам юратса вуламĕ-ха?

Кĕнекере 15 сăвă. Çав сăвăсем урлă поэт ачасене Шупашкар хулипе паллаштарать, хулари паллă предприятисем, культура çурчĕсем, больницăсем, стадион, Константин Иванов палăкĕ çинчен çырса кăтартать.

Кĕнеке «Тăван хула» сăвăпа пуçланать. Кунта поэт Шупашкар хулине ĕççыннисем кăмăлласа килнине кăтартать. Çав сăвва вуласан, хула илемĕ курăнать.

«Пуласси» сăвăра автор Шупашкарăн пулас сăнне уçса кăтартать. Л. Осинский художник хăйĕн ӳкерчĕкĕсемпе автор шухăшĕсене сăнласа парать.

Анчах кĕнекен лайăх енĕсенчен çитменлĕхĕсем ытларах.

Малтанах çакна палăртмалла: кĕнекене ачасем валли çырнине тӳрех ăнланса илме çук, кĕнеке хуплашки çинчи шупка ӳкерчĕке те ача-пăча кăмăлласса кĕтме хĕн. Ăна нумай тĕслĕ сăрпа пичетленĕ пулсан, тем пекех аван пулĕччĕ. Çавăн пекех чылай сăвăсене вулама йывăр ритмпа çырнă, хăшпĕр сăвăсем ачасен чĕрине пырса савăнтараймаççĕ, вĕсен психологийĕпе килĕшеймеççĕ.

Каламасăрах паллă, ачасем валли çырнă кĕнекен чĕлхи илемлĕ, яка, таса, çăмăл, ăнланма ансат пулмалла. Кунта аслă писатель Максим Горький сăмахĕсене аса илни вырăнлă. Вăл çапла каланă: «Говорить детям суконным языком проповеди—это значит вызвать в них скуку и внутреннее отталкивание от самой темы проповеди... С детьми можно говорить просто и увлекательно, без всякой дидактики, на самые серьезные темы».

Çавăнпа пĕрлех кĕнеке çырнă чухне хăш çулхи ачасем валли çырнине те асра тытмалла. Анчах Евстафьев юлташ хăйĕн нумай сăввисенче çакна шута илни пачах курăнмасть. Хăшпĕр сăвăсенче ача-пăча мар, çитĕнсе çитнисем ăнланма пултарайман вырăнсем те пур. Акă илер-ха «Электроаппарат тăвакан заводра» сăвва. Кунта автор ачасем валли çырнине пачах манса каять:

«Ак, шăва-шăва, конвейер вĕçне
Çитрĕ йăлт. Пăхатнăр—хатĕр аппарат.
Хыçалтан тепри. çак пĕрремĕшне
Çитес пек, васкавлăн шăвăнса пырать.
Кам пĕлет—мĕçен
Çак кăткăс ĕçе
Хутшăнаççĕ пулĕ чи ăста алăсем!..

Вулама та, ăнланма та йывăр ку строкасене. Строфан юлашки предложенийĕ, чăнах та питĕ «кăткăс» вара.

Çав сăвăрах:

«Акă кĕнеке хумалли шкап пек
Тимĕртен хайланă япала тăрать.
Ку панель тени. Речĕ-речĕпе
Ун çине монтажник аппарат
лартать», —

тенĕ строкасенче те ачасене ăнланмалла мар сăмахсем пур.

Кĕнекере халăх хушшине сарăлман, ăнланма çук сăмахсем те тĕл пулаççĕ. «Тăрпа», «Вонпукас» тенине чылай вулакансем Евстафьев кĕнеки тăрăх пуçласа илтĕççĕ. «Тăрпа»—мăрье е труба тени, Вонпукас—ял ячĕ пулас.

Пĕтĕм çĕршывĕнех паллă электроаппаратура завочĕ çинчен Н. Евстафьев шупкан кăна, хăюсăр çырса кăтартать, хăй те завод ĕçĕпе пурнăçне тĕплĕн пĕлменни сисĕнет. Завод çинчен лайăхрах çырма вăхăт çукран-ши е урăх чăрмавсем пулнăран-ши, поэт ачасене Шупашкара килме сĕнет.

«Çамрăк вулакан!
Завод курмасан,
Таврăнсан—каçармĕç тусусем ялта»,—

тет вăл.

«Хула урамĕсем» сăвăра поэт Шупашкарти урамсемпе çакасене, çав шутра çуртсене те шыв сапса çӳрени çинчен çырать. Çуртсене кулленех насуспа шыв сапса çӳренине çитĕннĕ çын мар, ача-пăча та ĕненес çук!

«Стадион» сăвăра автор футбол вăййипе футбол пӳскине пĕр япала вырăнне хурса, пăтраштарса калать. Футбол тапса кĕртни çинчен мар, пӳске çинчен çырасшăн пулнă пулĕ автор.

Шупашкарти пичет çуртĕнчен ĕççыннисене коммунизмшăн, Тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетессишĕн чĕнекен çулăмлă сăмахсем çапăнса тухаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ ун çинчен çиелтен кăна шăйăрттарса çырмалла пулман. Н. Евстафьев сăвви вара пичет çуртĕнче «Ялав» журнал кăна пичетлени çинчен каласа парать. Хаçатсене, кĕнекесене ăçта пичетлеççĕ-ши вара?

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем хыççăн пирĕн пичет çурчĕ хаçат-журналсем, кĕнекесем пичетлесе кăларассине чылай аванлатрĕ. Çав çуртран пичетленсе тухакан илемлĕ те паха кĕнекесене ачасем юратса вулаççĕ, лайăхрах кĕнекесем пичетленсе тухасса чĕререн кĕтеççĕ.

Типографире çĕнĕ те пуян техникăпа ĕçлеççĕ, пур ĕçе те машинăсемпе тăваççĕ. Çав чаплă фактсем çинчен ачасем питех те пĕлесшĕн çунаççĕ. Анчах пĕлеймесĕрех юлаççĕ.

Константин Иванов — чăваш халăхĕн ĕмĕр пурăнакан, юратнă поэчĕ. Ăна халăх хисеплет, тивĕçлипе мухтать. Анчах Евстафьев аслă поэт çинчен ынмех те каласа парайман. «Ун ячĕ çурхи шыв пек юхнă» тени тĕлĕнтерсех пăрахать вара, çын ячĕ шыв мар, юхма пултараймасть, сарăлма пултарать. Çурхи шыв вăхăчĕпе юхать те иртет, халăха мухтав кӳнĕ çыннăн ячĕ вара ĕмĕр-ĕмĕрех пирĕн чĕрере пурăнать.

Шупашкар хулинчи çĕнĕ çуртсене кăтартса панă чухне поэтăн ачасен шухăш-кăмăлне, туйăм-туртăмне тивĕçтермелли сăнсем, сăрсем тупмалла пулнă. Çавăнпа та унăн «Магазинта», «Стадион», «Поликлиника», «Пилĕк тинĕс çулĕ», «Пир-авăр комбиначĕ» сăвăсем ачасен шухăш-кăмăлне хускатаймаççĕ, вĕсем асра та юлмаççĕ.

Кĕнекене ачасем валли çырнă пулсан, унăн авторĕ чи малтанах вĕсене Шупашкарти ачасен паллăрах çурчĕсемпе паллаштармалла пулнă, ку вăл ачасен интересĕсемпе çывăх тăнине пĕлтернĕ пулĕччĕ. Н. Евстафьев вара ачасен техникăлла станцийĕ, ачасен паркĕ, ачасен канмалли çурчĕсем, площадкисем çинчен пĕр сăмах та шарламасть. Çавăнпа пĕрлех республикăри музей, кинотеатр, центральнăй библиотека çинчен çырни те питĕ кирлĕ пулнă. Вĕсем ачасен пурнăçĕпе çывăх тăраççĕ.

Н. Евстафьев çырса кăтартнă тăрăх, А. Н. Радищев «Халăх пусмăрçăсене пĕтĕмпех аркаттăр!—тесе йыхравласан, Разин тата Пугачев çарне пирĕн чăвашсем пĕрлешсе çĕкленнĕ имĕш. Историрен паллă: Разин Радищевран çĕр çул малтан пурăннă, çавăн пекех Пугачевăн пăлхавĕ те Радищев йыхравличчен пулса иртнĕ. Кунта пирĕн поэт историллĕ чăнлăха манса кайни курăнать.

«Асăнмалăх, савăнмалăх» сăвăра Н. Евстафьев Шупашкар хулинче государствăн паллă деятелĕсем пулни çинчен асăнса хăварать. Анчах вĕсем Шупашкарта мĕнле сăлтавпа пулнине ачасене каласа паман вара.

Тепĕр çитменлĕх. Поэт рифма, ритм хыççăн кайнипе сăмахсене кĕскетсе е пăсса каланă вырăнсем те тĕл пулаççĕ. «Çеç», «те», «ав», «тек» сăмахсем пĕр сăвăрах темиçе хут тĕл пулни те вулакана йăлăхтарса çитерет.

Çапла ĕнтĕ Н. Евстафьев çак питĕ кирлĕ ĕç çине çиелтен пăхнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл хăйĕн умне лартнă задачăна пурнăçласа çитереймен.

Сăвă кĕнекин поэтикăлла чĕлхи шупка та вăйсăр, унта ачасен ăс-тăнне кĕрсе юлакан илемлĕ вырăнсем, уйрăм картинăсем çукпа пĕрех. Сăвăсене типĕ чĕлхепе тата проза майлă çырнă.

Малашне, çак кĕнекене тепĕр хут кăларас пулсан, поэтăн унти çитменлĕхсемпе йăнăшсене тасатас пулать. Ăна идейăпа содержани тĕлĕшĕнчен тарăнлатни, сăвăсене çăмăл та илемлĕ чĕлхепе çырни, ӳкерчĕксенче ачасене çывăх та интереслентерекен вырăнсене кăтартни кирлĕ. Вара тин çак кĕнеке пурин кăмăлне те килĕшĕ.

Г. МАТВЕЕВ,
Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакторĕ.

С. ЮШКОВ,
педагогика наукисен кандидачĕ.

*) Н. Евстафьев, Пирĕн Шупашкар, Чăвашгосиздат, 1953 çул, хакĕ 1 т. 35 пус, 7.000 экз.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, партин пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09026 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2658. Тираж 20.000 экз.